24-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 15 пус.

1941
ИЮЛЬ
6
ВЫРСАРНИКУН
157 (5872) №

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН
ХАҪАЧӖ.

Чӑваш Коммуни

Йӑвашчунлӑха тата тимсӗрлӗхе пӗтермелле

Оборонӑн Государственнӑй Комитечӗн Председателӗ Сталин юлташ радио тӑрӑх туса каланӑ сӑмах пӗтӗм Совет ҫӗрӗ тӑрӑх хӑватлӑ чӗнӳ пек янӑраса кайрӗ. Пирӗн тӑван ҫӗршыв умне туса тӑнӑ пысӑк хӑрушлӑх вӑхӑтӗнче, пирӗн ҫӗршыв пуҫ тӳпинчен пуҫласа ура тупанне ҫитиччен хӗҫпӑшалланнӑ Германи фашизмне хирӗҫ вилӗмлӗ вӑрҫа кӗрсе кайнӑ вӑхӑтра халӑхсен ҫулпуҫӗн ӑслӑ та чӑнлӑхлӑ сӑмахӗсем совет халӑхне ӗҫпе кӗрешӳн боевой программипе — пирӗн тӑван ҫӗршывӑн хаяр тӑшманне ҫӗнтермелли, фашистла вӑрӑ-хурахсемпе сынҫиенсене ҫӗмӗрсе тӑкмалли ӗҫпе кӗрешӳ программипе хӗҫпӑшаллантарчӗҫ.

Сталин юлташ ҫакна кӑтартса пачӗ: пирӗн тӑван ҫӗршыв умне туса тӑнӑ хӑрушлӑха пӗтерме, тӑшмана ҫӗмӗрсе тӑкма чи малтанах ҫакӑ кирлӗ: совет ҫыннисен хӑрушлӑха пӗтӗмӗшпех ӑнланса илмелле, йӑваш чунлӑ пулма, тимсӗрлӗхлӗ пулма пӑрахас пулать, мирлӗ строительство вӑхӑтӗнчи шухӑш-кӑмӑлсене — хаяр та ултавлӑ тӑшмана хирӗҫ пыракан вӑрҫӑ условийӗсенче пысӑк сиен кӳме пултаракан шухӑш-кӑмӑлсене пӑрахас пулать. Ирсӗр тӑшман пирӗн ҫӗр ҫинче вилӗм тата ишӗлтерӳ акса ҫӳрет, вӑл ССР Союзӗнчи халӑхсем валли ҫарату, выҫлӑх тата чуралӑх илсе килет. «Ҫапла вара, ӗҫ Совет государствин пурнӑҫӗпе вилӗмӗ ҫинчен, ССР Союзӗнчи халӑхсен пурнӑҫӗпе вилӗмӗ ҫинчен, Совет Союзӗнчи халӑхсем ирӗклӗн пурӑнасси, е вӗсем чуралӑха кӗрсе ӳкесси ҫинчен пырать. Совет ҫыннисен ҫакна ӑнланса илни кирлӗ, нимӗн ҫинчен те шухӑшламасӑр пурӑнма пӑрахмалла, вӗсен хӑйсене мобилизацилемелле тата хӑйсен пӗтӗм ӗҫне урӑхлатса, вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи пек, ҫӗнӗ йӗркепе туса пымалла, тӑшмана каҫару пулмалла мар» (Сталин).

Митингсемпе пухусенче рабочисем, колхозниксем, интеллигенци совет тӑван ҫӗршывне хӑйсем ҫулӑмлӑн юратни ҫинчен, ултавлӑ тӑшмана хаярран тарӑхса курайманни ҫинчен, отечествӑна хӳтлесе хӑварассишӗн вӗсем кирек мӗнле жертвӑсем тума та хатӗрри ҫинчен, совет ҫӗрӗн кашни пусӑмне кӑкӑрпа тӑрса сыхлама хӑйсем хатӗрри ҫинчен каласа пӗлтереҫҫӗ. Совет ҫыннисен мухтавлӑ традицийӗ тӑрӑх вӗсен сӑмахӗсем ҫавӑнтах практикӑллӑ ӗҫсемпе ҫирӗпленеҫҫӗ. Вуншар пин патриотсем доброволецсем пулса Хӗрлӗ Ҫар ретне каяҫҫӗ, Хӗрлӗ Ҫара пулӑшма ҫӗршер пин ҫынсем халӑх ополченийӗн ретне кӗреҫҫӗ, шахтерсемпе металлистсем, оружейниксемпе машиностроительсем икӗ хут тата виҫӗ хут тухӑҫлӑрах ӗҫлесе ҫӗнтерӳ тупаҫҫӗ, колхозниксем ӑнса пулнӑ тырпула пухса кӗртеҫҫӗ.

Хӑюллӑх, паттӑрлӑх, кӗрешӳре хӑрама пӗлменни, тӑшмана хирӗҫ юлашки юн тумламӗ юлмиччен ҫапӑҫма хатӗр тӑни — совет ҫыннисен пахалӑхӗсем ҫакӑн пек ӗнтӗ. Тӑшмана хирӗҫ кӗрешме чӑрмантаракансене пурне те сирсе ывӑтмалла. Вӑрҫӑ условийӗсенче йӑвашчунлӑх тата тимсӗрлӗх тӑван ҫӗршыв оборонине ҫавтери пысӑккӑн чӑрмантараҫҫӗ. Йӑвашчунлӑ шухӑш-кӑмӑлсем пирӗн вӑйсене хӑвӑрт мобилизацилес ӗҫре чӑрмантармасӑр тӑма пултараймаҫҫӗ, тимсӗрлӗхлӗ пулни вара вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче тӑшман ӗҫне, унӑн шпионӗсемпе диверсанчӗсен ӗҫне ҫӑмӑллатать. Ҫавӑнпа та пирӗн вӑл хавшатакан тата тӑшмана усӑ кӳрекен тимсӗрлӗх кӑшт кӑна палӑрнине те татӑклӑнах пӗтерсе тӑкас пулать.

Пире калама ҫук вӑйлӑ организованность, ирӗк-кӑмӑла тата ӗҫсене, шухӑшсемпе туйӑмсене пӗтӗҫтерни кирлӗ. Аслӑ совет халӑхӗн пӗтӗм ӗҫӗ пӗр тӗллевпе — тӑшмана ҫӗнтерес тӗллевпе пулса пымалла. Тӑшман пирӗн тӑван ҫӗршыва, пирӗн чыслӑха тата ирӗклӗхе хӑратса тӑнӑ чухне совет ҫыннисен пӗр тӗллевсӗр пуҫне: тӑшмана ҫӗмӗрсе тӑкас! — текен тӗллевсӗр пуҫне урӑх шухӑшсемпе урӑх задачӑсем ҫук тата пулма та пултараймаҫҫӗ. Пирӗн пӗтӗм ӗҫ, пӗтӗм пурнӑҫ ҫак тӗллеве пӑхӑнса тӑмалла.

Хӗрлӗ Ҫар тӑшмана хирӗҫ геройла ҫапӑҫать. Тӑшманӑн чи лайӑх дивизийӗсем, унӑн авиацийӗн чи лайӑх чаҫӗсем ӗнтӗ совет ҫӗрӗ ҫинче хӑйсен вилӗмне тупрӗҫ пулин те, тӑшман, фронта ҫӗнӗ вӑйсем кӑларса тӑратса, малалла кайса пырать. Хӗрлӗ Ҫарпа Хӗрлӗ Флота паттӑррӑн пулӑшма, тӑшмана отпор пама ССР Союзӗнчи халӑхсен ҫавтери нумай вӑйӗсене хӑвӑрт мобилизацилес пулать. Вӑрҫӑ условийӗсенче пурне те вӑрҫӑ интересӗсене пӑхӑнтарас пулать. Ҫавӑн пек вӗрентнӗ Ленин, ҫавӑн пек вӗрентет Сталин. Советӑн кашни гражданинӗ хӑйӗнчен хӑй ҫапла ыйтма тивӗҫ: вӑрҫӑ валли, фронт валли, тӑшмана ҫӗмӗрсе тӑкас ӗҫ валли эпӗ пурне те турӑм-и-ха? ССР Союзӗнчи халӑхсен мӗнпур вӑйӗсене мӗн чухлӗ хӑвӑртрах тата кирлӗ таранах мобилизацилӗпӗр, пирӗн ҫӗршыв умне килсе тухнӑ пысӑк хӑрушлӑха ҫавӑн чухлӗ хӑвӑртрах сирсе ярӑпӑр, тӑшмана ҫавӑн чухлӗ часрах аркатса, ҫӗмӗрсе тӑкӑпӑр.

Тӑшман ултавлӑ та чее. Вӑл улталас тата провокацисем тӑвас ӗҫре опытлӑ. Германи фашизмӗ пек ирсӗр те ултавлӑ пулни историре халиччен тӗл пулман-ха. Тӑшман самолечӗсем советӑн мирлӗ хулисем ҫине бомбӑсем пӑрахаҫҫӗ. Фашистсем парашютист-диверсантсем антарса хӑвараҫҫӗ, вӗсен шпионӗсем пирӗн тыла хӗсӗнсе кӗме хӑтланаҫҫӗ тата малашне те хӑтланӗҫ. Советӑн простой ҫыннисем — хулара пурӑнакансем, колхозниксем, железнодорожниксем сыхӑлӑхлӑ тата хӑйсене шеллемесӗр ӗҫленине пула тӑшманӑн шпионла-диверсантла ӗмӗчӗсем арканса кайнӑ фактсем ҫӗршерӗн шутланаҫҫӗ ӗнтӗ. Пурте пӗлетпӗр, сывлӑшран пырса тапӑннинчен вырӑнта сыхланас ӗҫе — светомаскировкӑна, бомбоубежищӗсене, пушарсене сӳнтерес ӗҫе лайӑх организацилесен тӑшмансем сывлӑшран килсе тапӑннинчен пулакан сиене чылай сахаллатма пулать. Тӑшман провокацийӗ хыҫҫӑн кайкан, паника саракан, суя хыпарсем саракан кашни ҫын пирӗн тӑван ҫӗршывӑн оборонине чӑрмантарать, тӑшмана пулӑшать. Дезертирсене, паникерсене, хӑравҫӑсене каҫару пулмасть!

Пирӗн мирлӗ ҫӗршыв ҫине вӑрӑлла тапӑннӑ Германи фашизмне хирӗҫ пыракан вӑрҫӑра совет халӑхӗ тӗрӗс ӗҫе хӳтлет. Вӑл вӑрӑ-хурахсем тискерленсе кайнӑ бандинчен хӑйӗн ҫӗрне, хӑйӗн тӑван кил-ҫуртне хӳтлет. Германи фашисчӗсем Европӑри чылай ҫӗршывсене юн ӑшне путарчӗҫ тата ирӗклӗхе юратакан совет халӑхне нимӗҫ князӗсемпе баронӗсен пусмӑрне кӗртсе ӳкерессшӗн. Фашистла пусмӑрҫӑсемпе захватчиксене хирӗҫ пӗтӗм совет халӑхӗ отечественнӑй таса вӑрҫӑна ҫӗкленсе тухать. Пирӗн пӗтӗм ҫӗршыв хӗҫпӑшалланнӑ гигантла лагерь пулса тӑмалла, кашни хула оборона тӗрекӗ пулмалла, кашни завод, кашни ҫурт крепость пулса тӑмалла.

Фашизмӑн пирӗн ҫӗршыв ҫине тӑснӑ юнлӑ аллине касса татмалла, тата ҫав юнлӑ алла касса тататпӑрах! Ку чӑнах та ҫапла пулассине шантаракан вӑл — совет халӑхӗн хӑюллӑхӗпе паттӑрлӑхӗ, вӑл пирӗн хуласемпе ялсемшӗн юлашки юн тумламӗ юлмиччен ҫапӑҫма хатӗр тӑни, вӑл тӑшмана ҫӗмӗрсе тӑкма, ҫӗнтерӳ тума Ленин — Сталин партийӗ тавра, Совет Государстви тавра, Оборонӑн Государственнӑй Комитечӗ тавра пӗтӗҫсе тӑни пулать.

Пурне те фронт валли! Пурне те ҫӗнтерӳ валли!

(**«Правда» умстатьи, июлӗн 5-мӗш.**).

Колхозниксен активлӑхӗ

КУКЕҪ. Фашистла ҫӗлен-калтасем пирӗн куллен кун ҫирӗпленсе, ӳссе пыракан Совет ҫӗршывне кураймаҫҫӗ. Вӗсем ун тӑрӑх хӑйсен ирсӗр урисемпе утса ҫӳреме ӗмӗтленеҫҫӗ. Советӑн таса ҫӗрне таптаса вараласси вӗсенчен, фашистла бандитсенчен, нихҫан та пулас ҫук!

Рабочисем ӗҫ тухӑҫлӑхне нумай ӳстерчӗҫ. Вӗсем промышленность продукцине малтанхинчен 2—3 хут ытларах туса кӑларма тытӑнчӗҫ. Колхозниксемпе колхозницӑсем колхозри ӗҫсене ӑнӑҫлӑрах туса пыма пуҫларӗҫ. Юлашки 7—8 кун хушшинче районра государствӑна аш-какай парасси сисӗнмеллех ӳсрӗ. Колхозниксем государство умӗнчи обязательствӑсене срокченех пурнӑҫлаҫҫӗ. Малтанхи вӑхӑтра государствӑна кулленех 8—9 центнер аш-какай панӑ пулсан, халӗ кашни кунах 37—38 центнер параҫҫӗ. Уйрӑмӑнах Иккасси ялсовечӗ (председателӗ Мамонтов юлташ) ку тӗлӗшпе малта пырать. Ҫак 7—8 кун хушшинче 28 колхозник кӑҫалхишӗн государствӑна аш-какай парса татнӑ. Тулик-Хураски ялсоветӗнчи ӗҫҫыннисем те государство умӗнчи обязательствӑсене срокченех тултарма тӑрӑшаҫҫӗ. Юлашки 7 кун хушшинче ялсовечӗпе 17 центнер аш-какай панӑ. Ҫапла вара иккӗмӗш кварталти аш-какай памалли плана 153 процент тултарнӑ.

Шупашкар хулинчи парторганизаци активӗн пухӑвӗ

Ӗнер Советсен ҫуртӗн залӗнче Шупашкар хулинчи парторганизаци активӗн пухӑвӗ пулса иртрӗ. Пухура ВКП(б) Обком секретарӗ И. М. Чарыков юлташ хальхи вӑхӑт ҫинчен тата парторганизацисен задачисем ҫинчен доклад туса пачӗ. Пренире Богоявленский, Моргунов, Федотов, Давыдов, Золотников, Романова тата Алексеев юлташсем тухса каларӗҫ.

Пуху Чарыков юлташ докладӗ тӑрӑх резолюци йышӑнчӗ.

Актив пухӑвӗ ҫинчен тӗплӗнрех килес номерте ҫырса пӗлтеретпӗр.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Каҫхи пӗлтерӳ

Июлӗн 4-мӗшӗнче кунӗпех **Двинск**, **Борисов, Бобруйск** тата **Тарнополь** енӗсенче хаяр ҫапӑҫусем пынӑ. Фронтӑн ытти участокӗсенче пирӗн войскӑсем, хӑйсем йышӑнса тӑракан позицисене ҫирӗппӗн тытса тӑрса, пирӗн территори ҫине шӑтарса кӗме хӑтланакан противника хирӗҫ ҫапӑҫаҫҫӗ.

Двинск енче противник ҫапӑҫӑва танковӑй пысӑк соединенисем кӑларса тӑратнӑ, ҫак соединенисем хыҫҫӑн мотопехота наступлени тума пуҫланӑ.

Пирӗн войскӑсем хӑйсен позицийӗсене ҫирӗппӗн тытса тӑнӑ, противникӑн танкӗсене вӑйлӑн ҫӗмӗрнӗ. Противник ҫапӑҫӑва резервсене кӗртнӗ хыҫҫӑн кӑна пирӗн войскӑсем тепӗр вырӑна куҫнӑ.

Кунпа пӗрлех **Лепель** районӗнче те пысӑк ҫапӑҫусем пулса пынӑ, унта пирӗн войскӑсем противникӑн танковӑй чаҫӗсен нумай атакисене ӑнӑҫлӑн сире-сире янӑ. Кӑнтӑрла иртсен, авиаци вӑйлӑн пулӑшнипе пула, противник пирӗн чаҫсене хӗвелтухӑҫ еннелле темиҫе километр хушши хӗстернӗ.

Березина юханшывӗ патӗнче хаяр та тӑтӑшах пулса пыракан ҫапӑҫусем противникшӑн ӑнӑҫлӑ мар саралса пыраҫҫӗ. Вӑл Березина юханшывӗ урлӑ темиҫе хутчен те каҫма хӑтланнӑ, анчах пирӗн чаҫсем кашнинчех вӗсене каялла хӑваласа янӑ.

Тарнополь патӗнче кунӗпех вӑйлӑ ҫапӑҫусем пынӑ, унта противникӑн мотомеханизированнӑй пысӑк чаҫӗсем пирӗн войскӑсен фронтне татма тата кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫ еннелле кайма хӑтланнӑ. Ҫав ҫапӑҫусенче пирӗн войскӑсем хӑюллӑхпа паттӑрлӑхӑн образецӗсене татах тепӗр хут кӑтартса панӑ, вӗсем противникӑн пысӑк йышлӑ вӑйӗсен атакисене сирсе янӑ.

Пирӗн авиаци кунӗпех противник аэродромӗсене тата унӑн мотомеханизированнӑй чаҫӗсене пыра-пыра ҫапнӑ, вӗсене малалла кайма чарса лартнӑ тата пысӑк поражени кӳнӗ.

Тӗплӗн палӑртнӑ даннӑйсем тӑрӑх, ӗнерхи кун пирӗн авиаци противникӑн 62 самолетне персе антарнӑ.

* * *

Германи суя пропаганди кашни кунах нимӗҫсем тыткӑна илнисен хисепӗ ҫинчен, ҫавӑн пекех тата совет войскисем ҫухатнӑ танксемпе самолетсен хисепӗ ҫинчен фантастикӑлла тӗрӗс мар хыпар сарать. Суялӑхра путса ларса, Германи пропаганди июлӗн 4-мӗшӗнче кӑларнӑ сводкӑра питех те «хӑйне еверлӗ» суйса пӗлтернӗ: июнӗн 22-мӗшӗнчен пуҫласа совет самолечӗсем нимӗҫ командованийӗ малтанхи вӑхӑтра пӗлтернисенче кӑтартса панинчен 20—25 процент ытларах пӗтнӗ тесе шутламалла иккен.

Германи пропаганди нимӗҫ халӑхӗнчен ҫак факта ҫине тӑрсах пытарнине ҫеҫ паллӑ тӑвас пулать: совет войскисем геройла ҫапӑҫнипе пула, фашистла войскӑсен чи лайӑх дивизийӗсене Хӗрлӗ Ҫар ҫӗмӗрсе тӑкнӑ, нимӗҫсен вилнисемпе аманнисем сахалтан та 700 пин ҫынна ҫитеҫҫӗ. Ҫапла вара нимӗҫ войскисем туртса илнӗ районсенче нимӗҫ салтакӗсем, ҫапӑҫу хирӗнче вилӗм тупнӑскерсем, ҫӗршер пин ҫын выртса юлнӑ.

* * *

Хӑйӗн ҫулпуҫӗ — Сталин юлташ чӗнсе каланине ответлесе, Совет ҫӗршывӗ мӗнпур ӗҫе вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи пек ҫӗнӗлле йӗркелет.

Ленинградри ӗҫҫыннисем тӑшмана татӑклӑнах отпор пама хатӗр. Сталин юлташ чӗнсе каланӑ хыҫҫӑн, вуншар пин ленинградецсем халӑх ополченине кӗнӗ. Фрунзе ячӗпе тӑракан заводри рабочисемпе служащисен митингӗнче калама ҫук пысӑк хавхаланупа резолюци йышӑннӑ, унта митинг участникӗсем, пурте пӗр ҫын пек пулса, алла хӗҫпӑшал илсе хамӑрӑн тӑван ҫӗршыва хӳтлеме, революциллӗ сыхӑлӑха ӳстерме, завода оборонӑн никам пырса кӗреймен крепоҫӗ туса хума тупа тунӑ.

Орденпа виҫӗ хут наградӑланӑ Кировски заводра халӑх ополченин доброволецӗсен малти речӗсенче — ватӑ рабочисем, граждӑн вӑрҫин ветеранӗсем. Турбиннӑй цехри расточник Емельянов юлташ граждӑн вӑрҫин ҫулӗсенче алла хӗҫпӑшал тытса Советсен ҫамрӑк государствине хӳтленӗ. Халӗ, совет ҫӗршывӗ умне ҫӗнӗрен пысӑк хӑрушлӑх туса тӑнӑ вӑхӑтра, вӑл халӑх ополченине кӗрет. Унпа пӗрле унӑн 17 ҫулхи ывӑлӗ Виктор та, турбиннӑй цехра токарь пулса ӗҫлекенскер, ополченине каять. Емельянов юлташӑн хӗрӗ, Антонина, Кировски заводра ӗҫлет, вӑл та аманнӑ боецсене медицина енӗпе пулӑшу пама пулать. Мастер И. О. Глазков, Хӗрлӗ Ялав орденӗпе наградӑланӑскер, механик В. О. Цилосани тата граждӑн вӑрҫин ытти участникӗсем халӑх ополченин Кировски заводри рабочисенчен туса йӗркеленӗ боевой подразделенийӗсене ертсе пыраҫҫӗ.

Советлӑ Украинӑри ӗҫҫыннисем хӑйсен митингӗсенче ҫулӑмлӑ резолюцисем йышӑнаҫҫӗ. «Сире, Сталин юлташ, — тесе каланӑ хӑйӗн резолюцийӗнче Харьковри тракторсем тӑвакан завод коллективӗ, — ҫапӑҫура та, ӗҫ фронтӗнче те хамӑрӑн тӑван ҫӗре юлашки юн тумламӗ юлмиччен хӳтлеме тупа тӑватпӑр. Эпир хамӑрӑн ҫӗршыв умне туса тӑнӑ хӑрушлӑха пӗтӗмӗшпех ӑнланатпӑр, фронтра ҫӗнтерӳ тума мӗн кирлине пурне те тӑватпӑр».

Совет Союзӗн хулисенчи ӗҫҫыннисемпе пӗрле, колхозлӑ хресченсем те фашистла ордасене хирӗҫ кӗрешме хӑйсен вӗҫӗмсӗр нумай вӑйӗсене мобилизацилеҫҫӗ. Сталин юлташ чӗнсе каланине сӳтсе-явнӑ хыҫҫӑн, Воронеж облаҫӗнчи колхозниксем хӑйсен колхозӗсен руководителӗсене ҫакӑн пек наказ панӑ: государство поставкисем тӑрӑх пур заданисене те срокчен малтан тултармалла, паттӑр Хӗрлӗ Ҫара ялхуҫалӑх продукчӗсене ҫителӗклӗ таранах парса тӑмалла. Наказа пурнӑҫа кӗртме тытӑннӑ та ӗнтӗ, нумай колхозсем аш-какай планран иртерсе тӑратма пуҫланӑ.

* * *

Самолетсен Н-ски эскадрильи фашистсен шыв урлӑ каҫмалли переправине ҫӗмӗрсе тӑкма задани илнӗ. Чи малтан капитан Мантуровӑн звени вӗҫсе тухса кайнӑ. Вӑл противникӑн 5 переправине хӳтлесе тӑракан зенитнӑй батарейисене путарса лартнӑ та переправӑсем ҫине пырса тапӑннӑ. Бомбӑсем кирлӗ ҫӗре ӳкнӗ. Переправӑсене пӗтӗмӗшпех пӗтерсе тӑкнӑ. Тӑшман шыв урлӑ каҫайман.

* * *

Чикӗ ҫывӑхӗнчи районсенче фашистсен бомбӑсем пӑрахакан авиацийӗ пырса тапӑннӑ вӑхӑтра совет железнодорожникӗсем хӑйсен ӗҫне пӗр минутлӑха та чарса лартмаҫҫӗ. Фронт ҫывӑхӗнчи станцисенчен пӗринче дежурнӑй Таммистя юлташа бомба катӑкӗ амантнӑ. Вӑл хӑйӗн постне пӑрахса хӑварман. Пассажирски поездпа юнашарах бомба ӳкнӗ. Стрелочник Янгин юлташ составсене хӑвӑрт уйӑрнӑ. Пассажирсем пыракан вагонсене уйӑрса илнӗ. Бомба тепӗр темиҫе минутӑранах ҫурӑлса кайнӑ, анчах та нимӗнле сиен те туман.

* * *

Н. городокӗ патӗнчи вӑрманта пионерсен лагерӗ вырнаҫнӑ пулнӑ. Каҫхине пионерсем вӑрман тӗлӗнче самолет ҫаврӑнса ҫӳренине асӑрханӑ. Самолет пӗлӗтсем хушшине кӗрсе пытаннӑ, ҫакӑн хыҫҫӑн пионерсем часах 4 парашютиста тӗл пулнӑ, вӗсем, вырӑсла начар калаҫса, хулана каякан ҫул ҫинчен ыйтнӑ. Пионерсем ҫак паллӑ мар парашютистсене суйса урӑх ҫулпа янӑ, вӗсем ҫинчен красноармеецсен чаҫне пӗлтернӗ. Красноармеецсен группи диверсантсене часах тупнӑ. Гитлерла вредительсем совет тылне кӗме хӑтланни каллех ӑнӑҫсӑр пулнӑ.

* * *

Хӗрлӗ Ҫар чаҫӗсем Германи фашизмне хирӗҫ геройла ҫапӑҫни ҫинчен ютҫӗршывсенчи пичет анлӑн ҫутатать. Юлашки вӑхӑтра хаҫатсенче пичетлесе кӑларнӑ пит нумай статьясенче Хӗрлӗ Ҫарӑн хӑюллӑ та паттӑр ӗҫӗсем ҫинчен калакан фактсене илсе кӑтартаҫҫӗ. Америкӑри «Нью-Йорк таймс» хаҫат: «Хӗрлӗ Ҫарӑн боевой духӗ пирки нимӗнле иккӗленӳ те ҫук», тесе ҫырать. Турцири «Ватан» хаҫат ҫапла ҫырать: Германия хӑйӗн ҫӗнтерӗвӗ ҫинчен пӗлтернисем пурнӑҫа кӗреймерӗҫ, Хӗрлӗ Ҫар нимӗҫсен хут ҫинче туса хунӑ тӗллевӗсене пӑтраштарса ячӗ. Вырӑссем, тесе ҫырать малалла хаҫат, «Финсене хирӗҫ пулнӑ вӑрҫӑри опытпа усӑ курма пӗлнӗ тата Германин ҫиҫӗм пек хӑвӑрт наступлени пулмалли методне пӗлсе тӑнӑ. Германин мотомеханизированнӑй чаҫӗсем пырса тухсан, вырӑс пехотинче нимӗнле паника та пулман, вӑл Германин мотомеханизированнӑй вӑйӗсемпе пехота хушшинчи ҫыхӑнӑва татма пултарнӑ. Нумайӗшӗсем Германи салтакӗсене питех те вӑйлӑ тесе шутлаҫҫӗ. Чӑнах та, хӑйсене хирӗҫ тӑрса ҫапӑҫман ҫӗршывсенче вӗсем хавхаланса кӗрешнӗ. «Германи салтакӗсем вӗҫӗмсӗр пысӑк территори ҫинче, Россия пек пысӑк территори ҫинче, Хӗрлӗ Ҫара хирӗҫ ҫапӑҫнӑ ҫӗрте хӑйсен шанчӑклӑхне ҫухатас ҫуккине ӗненме йывӑр. Ҫакна йышӑнас пулать: вырӑссем халиччен хирӗҫ тӑни, ҫавӑн пекех тата операцисене ертсе пыни нимӗҫсемшӗн кӗтмен ҫӗртен тухса тӑнӑ япала пулчӗ», — тесе вӗҫлет хаҫат.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Ирхи пӗлтерӳ

Июлӗн 5-мӗш ыран тенӗ чухне ҫӗрле фронтра пулса иртнӗ ҫапӑҫу ӗҫӗсем пирӗн войскӑсен положенийӗнче тата группировкинче паллӑ улшӑнусемех тӑвайман.

Мурманск, Кандалакша енӗсенче тата **Карельский перешеекра** пирӗн войскӑсем противникӑн уйрӑм групписене хирӗҫ ҫапӑҫнӑ.

Борисов тата **Бобруйск** енӗсенче, **Березина** юханшывӗпе **Друть** юханшывӗ ҫинче ҫӗрӗпех ҫапӑҫусем пынӑ. Противник ҫак юханшывсем урлӑ каҫма темиҫе хутчен те хӑтланса пӑхнӑ, анчах ӑна пирӗн войскӑсем пӑшалсенчен персе ӑнӑҫлӑн сире-сире янӑ. Противникӑн шыв ҫинче те тата ҫыранра та пысӑк ҫухатусем пулаҫҫӗ.

Тарнополь патӗнче хӑйӗн ӗҫӗсем ӑнӑҫлӑ пулманнине кура, противник хӑйӗн танковӑй пысӑк соединенийӗсене **Новоград-Волынск** енче ҫӗнӗрен ҫапӑҫӑва вӑйлӑн хутшӑнтарнӑ.

Кунта пирӗн войскӑсем противникӑн танкӗсене хирӗҫ ҫӗрӗпех ӑнӑҫлӑн кӗрешнӗ, танксене чылай пысӑк поражени кӳнӗ тата вӗсене хӗвелтухӑҫнелле куҫма чарса тӑнӑ.

Фронтӑн **Бессарабири** участокӗнче противник танксемпе пӗрле пехотӑн пысӑк вӑйӗсене ҫапӑҫӑва хутшӑнтарнӑ, вырӑнӗ-вырӑнӗпе **Прут** юханшывӗ урлӑ каҫнӑ, ӑнӑҫу тума хӑтланса пӑхнӑ, анчах та пирӗн войскӑсем противникӑн наступленине чарса тӑраҫҫӗ.

Пирӗн авиаци противникӑн аэродромӗсем ҫине, унӑн мотомеханизированнӑй чаҫӗсем ҫине ӑнӑҫлӑн пыра-пыра ҫапнӑ.

Сывлӑшра пулса иртекен ҫапӑҫусенче пирӗн истребительсем противник авиацине чылай пысӑк ҫухатусем кӳреҫҫӗ. Туллимар хисепсем тӑрӑх июлӗн 4-мӗшӗнче сывлӑшра пулса иртнӗ ҫапӑҫусенче пирӗн авиаци противникӑнне 43 самолет персе антарнӑ, хамӑрӑн 27 самолет пӗтнӗ.

* * *

Сталин юлташӑн сӑмахӗ совет халӑхне ҫӗнӗ те паттӑр ӗҫсем тума хавхалантарчӗ. Украинӑри хуласемпе ялсенче рабочисен, колхозниксен, служащисен массӑллӑ митингӗсемпе пухӑвӗсем пулса иртнӗ. Митингсенче туса каланӑ сӑмахсенче тата йышӑннӑ резолюцисенче Хӗрлӗ Ҫара пӗтӗм вӑйсемпе пулӑшса, фашистла ҫынҫиенсене ҫӗмӗрсе тӑкса тӗппипех пӗтерме ҫирӗппӗн тупа туни янӑраса тӑрать. Днепропетровскри Ленин ячӗпе тӑракан заводри рабочисемпе служащисем хӑйсен Сталин юлташ патне янӑ ҫырӑвӗнче ҫапла ҫыраҫҫӗ: «Эпир пурте, пӗр ҫын пек пулса, хамӑрӑн юратнӑ тӑван ҫӗршыва хӳтлеме тухма тупа тӑватпӑр. Хамӑрӑн тӗрӗс ӗҫ ҫӗнтерӗвӗшӗн пурнӑҫа та парӑпӑр».

Андрей Матюшенко—Афанасий Матюшенко ывӑлӗ—1905 ҫулта «Потемкин» броненосец ҫинчи революциллӗ восстани Геройӗн ывӑлӗ Сталин юлташӑн сӑмахне итленӗ хыҫҫӑн заявлени панӑ, унта хӑйне действующи Хӗрлӗ Ҫар ретне илме ыйтать. Заявленире вӑл ҫапла ҫырать: «Манӑн атте тӗрӗс ӗҫшӗн кӗрешсе вилнӗ. Эпӗ халӗ хамӑрӑн юратнӑ тӑван ҫӗршыва фашистла вӑрӑ-хурахсенчен хӳтлеме тӑрасшӑн».

Сталинград облаҫӗнчи ӗҫҫыннисем ҫулпуҫ чӗнсе каланине ӗҫ тухӑҫлӑхне малалла ӳстерсе пынипе ответлеҫҫӗ. Сталинградри трактор заводӗнчи формовщиксен бригади июлӗн 3-мӗшӗнче нормӑна 440 процент тултарнӑ. Заводри инженерсем, техниксемпе служащисем, хӑйсен сменине пӗтернӗ хыҫҫӑн, станоксем умне татах виҫӗ сехетлӗхе тӑраҫҫӗ. Куйбышев ячӗпе тӑракан вӑрман заводӗнчи рабочисем канмалли кун ҫӗршыв оборони валли ӗҫлеме йышӑннӑ. Пиншер патриотсем транспортра тиес тата пушатас ҫӗрте хӑйсен ирӗкӗпе ӗҫлеҫҫӗ.

Ярославльри тата Ярославль облаҫӗнчи рабочисемпе колхозниксем ҫулпуҫ сӑмахне производствӑллӑ ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсем тунипе ответлеҫҫӗ. Автозаводри токарь Михайлов июлӗн 3-мӗшӗнче пӗр кунхи заданине 564 процент, токарь Бахвалов—400 процент тултарнӑ. Ярославльри 60.000 ытла пионерсемпе школьниксем июлӗн 4-мӗшӗнче облаҫри колхозсемпе совхозсен уйхирӗсене ӗҫе тухнӑ.

* * *

Прут юханшывӗ ҫинче Германипе Румыни захватчикӗсене хирӗҫ пулса иртнӗ ӑнӑҫлӑ ҫапӑҫусенче Хӗрлӗ Ҫарӑн командирӗсемпе боецӗсем героизмпа хастарлӑхӑн чаплӑ образецӗсене кӑтартса панӑ. Капитан Рыбкин ертсе пыракан стрелковӑй батальон противник 4 сехет хушши артиллерирен пенине чӑтса тӑнӑ тата виҫӗ атакӑна сире-сире янӑ. Тӑшман, 350 салтак ҫухатса, хӑйсен малтанхи вырӑнӗ ҫине чакса кайнӑ. Ҫак ҫапӑҫура лейтенант Железняк юлташ 7 фашиста штыкпа чиксе вӗлернӗ. Снайпер-красноармеец Истомин ҫапӑҫусенче пӗр кун хушшинче тӑшманӑн 8 салтакне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Совет пехотин — штыксемпе тӑвакан хаяр атакисенче нимӗҫсен фашистла войскисем чӑтса тӑма пултарайман атакӑсенче пирӗн командирсем боецсене хӑйсен геройла примерӗсемпе хавхалантарса пыраҫҫӗ. Кӗҫӗн лейтенанта Кобец юлташа контратака туса тӑшман прорывне пӗтерсе тӑкма приказ панӑ. Атакӑна тухас умӗн унӑн подразделенийӗ ҫине противник минометсенчен вӑйлӑн пеме пуҫланӑ, вара подразделени ҫӗр ҫине выртнӑ. Тӑшман ҫавтери вӑйлӑн персе тӑнине пӑхмасӑрах, Кобец юлташ малалла ыткӑннӑ. «Тӑван ҫӗршывшӑн!» — тесе кӑшкӑрса, вӑл боецсене штыксемпе тӑвакан атакӑна ҫапӑҫӑва ертсе кайнӑ. Тӑшмана хӑваласа янӑ. Капитан Ансов та ҫавӑн пекех тунӑ: вӑл хӑйӗн подразделенине атакӑна илсе кайнӑ та тӑшмана окопсенчен хирсе кӑларса, Румынин чикӗри заставине тытса илнӗ.

* * *

Совет железнодорожникӗсем хӑйсен станцийӗсене, депосене, ҫулсене фашистла авиаци килсе тапӑннинчен сыхлаҫҫӗ. Транспорт ҫинчи рабочисемпе командирсем калама ҫук пысӑк чӑтӑмлӑх тата паттӑрлӑх кӑтартаҫҫӗ. Н. станцинчи рабочисемпе служащисем, Германин сывлӑшри налетчикӗсем персе тӑнӑ пулсан та, хӑюллӑн ӗҫленӗ. Пырса тапӑннӑ вӑхӑтра поездсем ним тытӑнса тӑмасӑр ҫӳренӗ. Стрелочниксем Трокайло, Токарчук тата Регеша хӑйсен посчӗсенчен тухса кайман. Пирӗн зенитнӑй батарейӑсем сывлӑшри атакӑна ӑнӑҫлӑн сирсе янӑ вӑхӑтра, Н-ски ремонтнӑй заводри рабочисем ответлӑ заданине тултарас ӗҫе пӗр минутлӑха та чарса лартман.

* * *

Демократиллӗ пур ҫӗршывсенче те нумай пин ҫынлӑ митингсенче Совет Союзне пулӑшма чӗнекен тата Совет халӑхӗпе пӗр шухӑшлӑ пулма чӗнсе калакан резолюцисем йышӑнаҫҫӗ. Англири Кӑнтӑр Уэльсри горнорабочисен 120 пин рабочине пӗрлештерсе тӑракан союзӗн исполкомӗ тата Кӑнтӑр Уэльсри горняксен вырӑнсенчи нумай групписем, Ливерпульри верфьсенче ӗҫлекен рабочисем, Хӗвеланӑҫ Англири конторски тата административлӑ служащисен союзӗн конференцийӗ тата ытти нумай организацисемпе рабочисем те ҫавӑн пек резолюцисем йышӑннӑ. Аргентинӑра та Совет халӑхӗпе пӗр шухӑшлӑ пулнине кӑтартакан движени анлӑн саралса пырать, унта СССР тусӗсен вуншар комитечӗсене тунӑ. Комитетсем коллективпа ҫырнӑ ҫырусене нумай илнӗ, ҫав ҫырусенче Совет Союзне хӗрӳллӗн кӑмӑлланине кӑтартса панӑ.

Пысӑк ҫӗкленӳпе ӗҫлеҫҫӗ

ВӐРНАР. Июлӗн 3-мӗшӗнче районри предприятисемпе артельсенче, учрежденисенче тата колхозсенче Сталин юлташ сӑмахне пӗрле пухӑнса, радио тӑрӑх итлерӗҫ. Сталин юлташ сӑмахне итленӗ хыҫҫӑн пур ҫӗрте те митингсем пулчӗҫ.

Кольцовка, Зеленовка, Булатово, Кустӳмер, Уравӑш колхозӗсенче митингсем пысӑк активлӑхпа иртрӗҫ. Кипекри «Память Ленина» колхозра митинг пулнӑ хыҫҫӑнах государствӑна тӗштырӑ пама 21 лав тухса кайрӗҫ. Ҫак колхозра государствӑна паха тырӑ параҫҫӗ. А. Королева, А. Кустина колхозницӑсем тырӑ тасатнӑ ҫӗрте кӑтартуллӑн ӗҫлеҫҫӗ.

Сталин ячӗпе тӑракан колхоз членӗсем Сталин юлташ сӑмахне пысӑк тимлӗхпе итлерӗҫ. Ҫавӑн хыҫҫӑнах вӗсем митинг туса ирттерчӗҫ. Митингра СССР Верховный Совет депутачӗ, колхоз председателӗ Коротков юлташ ҫапла каларӗ:

— Урса кайнӑ фашистсем пирӗн ҫине вӑрӑ-хурахла тапӑнчӗҫ. Эпир, колхозниксем, тыла ҫирӗплетессишӗн, Хӗрлӗ Ҫара пулӑшассишӗн тӑрӑшса ӗҫлеме тивӗҫлӗ. Пирӗн уйхирсенче пысӑк тухӑҫлӑ тырпул ҫитӗнет. Ӑнса пулакан тырпула кӗске срокра, тӑкаламасӑр пуҫтарса кӗрӗпӗр, государство умӗнчи обязательствӑсене срокчен тултарӑпӑр. Колхозниксемпе колхозницӑсем, хамӑр ӗҫре тӳрӗ кӑмӑлпа ӗҫлер, пирӗн тыл ҫирӗп пултӑр. Эпир пӗлетпӗр тата шанса тӑратпӑр: пирӗн Хӗрлӗ Ҫарпа Тинӗс-Ҫар Флочӗ нихҫанхинчен те вӑйлӑ. Совет халӑхӗ тата мухтавлӑ Хӗрлӗ Ҫар, Совет Авиацийӗ социализмлӑ тӑван ҫӗршыв ҫине вӑрҫӑпа килсе тапӑннӑ фашистсене тивӗҫлӗ отпор парӗ, вӗсене йӑлтах ҫӗмӗрсе тӑкӗ.

Районри нумай колхозсем государствӑна кӑҫалхи ҫулшӑн тӗштырӑ срокчен парса татаҫҫӗ. Зеленовка, Кольцовка, Кустӳмер, Синдимиркино, Мамалай, Рункӑ, Волонтер колхозсем пур культурӑсем тӑрӑх та государствӑна тӗштырӑ парса татнӑ.

Колхозсем халӗ уйхирте ҫум ҫумлаҫҫӗ, уборкӑна хатӗрленеҫҫӗ, государство умӗнчи обязательствӑсене срокчен тултарас тӗлӗшпе ӗҫлеҫҫӗ. Колхозсенче ҫар ӗҫне вӗренеҫҫӗ. Кашни колхозра самозащита групписене тунӑ.

В. ЦЫПЛЕНКОВ.

Тăван çĕршыва сыхлама яланах хатĕр

ÇĔМĔРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Оборонăн Государственнăй Комитечĕн Председателĕ Сталин юлташ радио тăрăх тухса каланă сăмаха районри пиншер ĕççыннисем пысăк тимлĕхпе итлерĕç. Çав кунах, июлĕн 3-мĕшĕнче, предприятисемпе колхозсенче, учрежденисенче митингсемпе пухусем пулса иртрĕç. Рабочисемпе колхозниксем тата совет интеллигенцийĕ тăван çĕршыва парăнса ĕçленине, партипе правительство тавра, аслă Сталин юлташ тавра таччăн, хурçă пек çирĕп пĕтĕçсе тăнине татах та тепĕр хут çирĕплетсе параççĕ.

«Большевик» заводри ĕçлекенсен митингĕнче завод директорĕ Шустин юлташ çапла каларĕ:

—Фашистла Германия пирĕн çĕршыв çине вăрçăпа тапăнчĕ. Вăрă-хурахсем пирĕн хуласем, ĕççыннисем çине бомбăсем пăрахаççĕ. Вĕсем пирĕн телейлĕ çĕршыва хăйсен колонийĕ туса хума ĕмĕтленеççĕ. Çак ирсĕр ĕмĕт нихăçан та пурнăçа кĕрес çук! Паттăр Хĕрлĕ Çар кирек мĕнле тăшмана та çапса аркатĕ. Эпир тăван çĕршыва сыхлама, хамăрăн паттăр Хĕрлĕ Çара пулăшма яланах хатĕр. Тылра пирĕн пурин те пĕр шухăшлă пулмалла: нихçанхинчен лайăх ĕçлемелле, сыхăлăхлă тата дисциплинăллă пулмалла, Ленин—Сталин партийĕ тавра татах та тачăрах пĕтĕçсе тăмалла, — терĕ Шустин юлташ.

Заводри стахановец, комсомолец-слесарь Самойлов юлташ митингра рабочисене пурне те стахановла ĕçлеме тата çав вăхăтрах вăрçă ĕçне вĕренме чĕнчĕ.

— Пирĕн халĕ кашнин хăйне мобилизациленнĕ тесе шутламалла. Эпир паян производствăра пулсан, ыранах пăшал тытса фронта кайма, телейлĕ пурнăçшăн хамăрăн пуçа пама та хатĕр. Производствăра татах та лайăхрах ĕçлесе, фашистла бандитсене çапса салатма Хĕрлĕ Çара пулăшар,— терĕ Самойлов юлташ.

Коллектив, пурте пĕр çын пек пулса, резолюци йышăнать. Унта çапла каланă:

«Германи фашизмĕ, Совет Союзĕпе тунă мирлĕ договора пăсса, вăрçă пуçласси çинчен пĕлтермесĕр, пирĕн тăван çĕршыв çине вăрçăпа тухрĕ. Çакна хирĕç, Совет правительстви хушнипе, Хĕрлĕ Çар социализмлă çĕршыва хӳтлеме тăчĕ. Хĕрлĕ Çарпа пĕрле тăван çĕршыва сыхлама пĕтĕм Совет халăхĕ ура çине çĕкленчĕ.

Эпир, «Большевик» заводри рабочисемпе работницăсем тата интеллигенци, СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ, СССР Совнаркомĕ тата ЦК ВКП(б) Оборонăн Государственнăй Комитетне тунине тулли кăмăлпа ырлатпăр. Эпир Оборонăн Государственнăй Комитечĕн Председателĕ Сталин юлташ радио тăрăх пĕтĕм халăха Ленин—Сталин партийĕ тавра татах та тачăрах пĕтĕçсе тăма каланине çирĕппĕн асра тытса, пĕтĕм вăя тыла çирĕплетнĕ çĕре пама, тӳррĕн те хастарлăн ĕçлеме, сыхăлăхлă пулма тупа тăватпăр. Тăван çĕршыва сыхлама эпир пурте пĕр çын пек хатĕр тăратпăр.

Революциллĕ сыхăлăха татах та ытларах ӳстерер, дезорганизаторсене, дисциплинăна пăсакансене пĕтерер! Пурте çар ĕçне вĕренер! Фашистла çĕлен-калтасене тĕпĕ-йĕрĕпех пĕтерер! Пирĕн ĕç — тĕрĕс ĕç. Ленин—Сталин партийĕ тавра татах та тачăрах пĕтĕçсе тăрар!

Сывă пултăр Ленин — Сталин партийĕ!

Сывă пултăр паттăр Хĕрлĕ Çар!

Сывă пултăр пирĕн атте, учитель, юратнă Сталин юлташ!»

Совет Союзĕнчи аслă халăхăн ирĕклĕхĕшĕн!

Цехсенчи митингсем хăйсем тĕллĕн пуçланчĕç. Мускаври Сталин ячĕпе тăракан автозаводри рабочисен тата специалистсен ушкăнĕ, кăнтăрлахи сменăна ĕçе пынăскер, репродуктор умне пуçтарăннă. Социализмлă тăван çĕршывăн хĕрӳллĕ патриочĕсем — рабочисем, работницăсем, инженерсем, служащисем митингра тухса хĕрӳллĕ сăмахсем каланă, аслă çулпуç Сталин юлташ чĕнсе каланине ответлесе тăван çĕршывшăн, унăн ирĕклĕхне хӳтлессишĕн юлашки юн тумламне пама хатĕр тăни çинчен пĕлтернĕ. Кашни оратор Совет çĕрĕ çине тапăннă усал тăшмана кураймани çинчен каланă.

Пĕрремĕш механосборочнăй цех умне заводăн ертсе пыракан икĕ цехри рабочисем, работницăсем, мастерсем тата руководительсем пуçтарăннă.

Мастер Максимов юлташ хĕрӳллĕ сăмах тухса калать. Вăл çапла калать:

— Пирĕнтен кашниех пĕр ĕç çинчен шутлаççĕ—хăйĕн тăван çĕршывĕ çинчен, ун çине тискеррĕн тапăннă тăшмана мĕнле пĕтересси çинчен шутлаççĕ. Пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар çине, питĕ вăйлă хĕçпăшалланнă нимĕç фашисчĕсене хирĕç çапăçакан Хĕрлĕ Çар çине геройла тата пархатарлă задача тиврĕ. Анчах та тылра юлакан çынсем умĕнче те питĕ пысăк задачăсем тăраççĕ. Хамăрăн Хĕрлĕ Çара ытларах металл, ытларах машина, ытларах хĕçпăшал памалла, пирĕн мухтавлă боецсем тата командирсем нимĕн çитменнине те ан туйччăр.

Мĕнпур йышши пăшăлтисене, паникерсене, дезорганизаторсене, хăравçăсене хирĕç вĕсене таркăнсем тата тăшмансене пулăшакансем вырăнне хурса кĕрешетпĕр. Вĕсене нимĕн хĕрхенмесĕр хамăр çул çинчен сирсе ывăтатпăр, нимĕнле йывăрлăха пăхмасăр тата пурнăçа хĕрхенмесĕр çĕнтерӳ патне каятпăр. Тăшмана эпир çапса çĕмĕретпĕр! Совет халăхĕ хăйĕн пĕтĕм вăйĕпе, паттăрла пĕвĕпе хăйĕн тăван çĕрне хӳтлеме çĕкленчĕ!

Трибуна çинче — рабочи Мурзаков. Вăл митинга резолюци йышăнма сĕнӳ парать. Рабочисем, работницăсем тата специалистсем пĕр шухăшлă пулса хăйсен заводĕнчи тата çĕршыври мĕнпур рабочисене чĕнсе çыру яраççĕ.

— Коммунистла партие, Совет правительствине, хамăрăн аслă çулпуç Сталин юлташа çакна шантарса калатпăр: кирлĕ пулсан тăван çĕршывшăн пурнăçа паратпăр. Совет халăхĕн ирĕклĕхĕшĕн, тăван çĕршывăн чыслăхĕпе мухтавĕшĕн, хамăрăн телейшĕн эпир хамăрăн мĕнпур вăя, мĕнпур хăвата паратпăр.

Хамăр ĕçе фронта пăхăнтарса туса пыратпăр. Кашни ытлашши патрон, самолет, танк туса кăларнинчен пирĕн çĕнтерӳ пулать. Хамăрăн хăватлă Хĕрлĕ Çара мĕн май килнĕ таран ытларах хĕçпăшал памалла, ăна мĕн кирлĕ—çавна памалла.

Сывă пултăр пирĕн аслă тăван çĕршыв! Сывă пултăр Советăн аслă халăхĕ тата унăн çулпуçĕ Сталин юлташ!

Оборонăн Государственнăй Комитечĕн Председателĕ Сталин юлташ радио тăрăх сăмах тухса каланă ятпа автозаводăн ытти цехĕсенче те митингсем пулса иртнĕ. Социализмлă тăван çĕршывăн патриочĕсемпе патриоткисем тăван çĕршыва юратни, ăна хӳтлеме хатĕр тăни çинчен хĕрӳллĕ сăмахсем каланă.

Тĕрлĕ çултисем тата тĕрлĕ профессиллĕ çĕршер çынсем—рабочисем, мастерсем, инженерсем тата служащисем халăх ополченине çырăнаççĕ. Çак çынсем, Совет патриочĕсен миллионĕсем, хăйсен тăван çĕршывне, хăйсен чыслăхне тата ирĕклĕхне юлашки юн тумламĕ юлмиччен сыхлаççĕ. (ТАСС).

Фашизм — этемлĕхĕн чи ирсĕр тăшманĕ

Кучухнехи Германие кам тытса тăрать?

Историн мĕскĕн каяшĕсем, — нимĕç фашисчĕсем çинчен Горький çапла питех те тĕл каланă, — яланах хупахсенче сĕтĕрĕнсе çӳрекенскерсем тата юлашки çулсенче Германире тунă мĕнпур ирсĕр ĕçсене хутшăннăскерсем, влаçа хăйсен аллине вăрă-хурахла çавăрса илсе тата пурне те кулмалăх хăйсене «национал-социалистсем» тесе ят парса, темиçе çул хушши ĕнтĕ пĕр юнлă вăрçă хыççăн тепĕр юнлă вăрçă туса пыраççĕ.

Алхасса кайнă авантюристсен — Гитлер пуçкасанĕсен шайккин бандитла влаçĕ вăхăтĕнчи пек çулсене Германия хăйĕн историйĕнче нихăçан та пурăнса иртермен.

Тĕнчене Гĕтепе Лессинга, Гейнепе Бетховена, Гегельпе Маркса панă çĕршывăн, штыкпа тата çакса вĕлерессипе хăратса тăнине пула, халĕ ĕнтĕ сĕмсĕр те инçете курман правительсен юнлă алхасăвĕсене, авантюристла хăтланăвĕсене, ирсĕр ĕçĕсене хăй вăхăчĕ çитиччен ирĕксĕрех ним чĕнмесĕр тӳсе ирттерме тивет. Влаçа хăйсен аллине çавăрса илсе, Гитлерăн ирсĕр этеммисем çĕр çинчи халăхăн пысăк пайне вăрçа илсе кĕчĕç, хăйсен договорĕсене улталăн пăсрĕç, нимĕç халăхĕн чи çамрăк та вăйлă пайне пĕтерчĕç, пĕтереççĕ те, нимĕç халăхĕн малта тăракан, тӳрĕ кăмăллă, ирĕклĕхе юратакан çыннисене касса тураççĕ, пĕтерсе пыраççĕ, нимĕç халăхне тата Европăри ытти çĕршывсенчи халăхсене те пĕр юнлă лачака хыççăн тепĕр юнлă лачакана кĕртсе яраççĕ.

Иртĕхсе кайнă авантюристсем, свастика палли çакнă юн ĕçекен йытăсем, чуралăха таварма сĕмсĕр вăйпа усă курас правăран пуçне урăх нимĕнле правăна та йышăнманскерсем, камсем-ха вĕсем? Çак пурне те улталăн сутакан, тасине нимĕн те йышăнман, хăйсен ирсĕр те киревсĕр кăмăлĕсемпе шухăшĕсене канăçтармашкăн кашни минутăрах чи хăрушă та юнлă ĕçсем тума хатĕр тăракан этемсем камсем-ха вĕсем?

Вăл этемсене миллионшар çынсем ылханаççĕ тата малашне те ылханĕç, вĕсен ячĕсене халăхсем яланах кураймасăр асăнĕç, пĕтĕм чун-чĕререн йĕрĕнсе калĕç; вăл этемсем — Гитлер, Геринг, Геббельс, Фрик, Риббентроп тата ыттисем те, çак ирсĕр каяшсем тĕрлĕ майпа кăтланса иртнĕ вăхăтра та тĕттĕм ĕçсем тунă. Вĕсене пĕр çакă çеç пĕрлештерет: вĕсем Германири халăх массисене хирĕç, çавăн пекех тата ытти çĕршывсенчи халăх массисене хирĕç те чи тискер те усал майсемпе тăраççĕ. Кун çинчен ĕнтĕ фашистсем хăйсем те çыраççĕ. Нумаях пулмасть фашист Ганс Фрейер кăларнă кĕнекере уççăнах тата официально çапла каланă: «тĕрлĕ киревсĕрсем çине таянса, политикăллă гений хăйне пуçпулса тăракан туса хурать», тенĕ.

Фашистла Германин пуçпулса тăракан пĕчĕк ушкăнĕшĕн хăйĕн халăхĕнчен хăрушăрах тăшман çук,—вĕсем унран хăраççĕ, ăна кураймаççĕ. Политикăллă авантюристсемпе бандитсем халăх çине урăхла пăхма пултараймаççĕ; Гитлер каланă тăрăх, «массăсем сахал ăнланаççĕ, вĕсен ăс-пуçĕ пĕчĕкçĕ», «халăх наян»; Гитлерăн демагоги енĕпе тата массăсене ăстăнсăрлататас тĕлĕшпе ĕçлекен пысăк мастерĕ Геббельс «массăсен чи авалхи туйăмĕсем патне каялла таврăнма» чĕннĕ.

Аркатасси, пĕтересси, вĕлересси! Концлагере ярасси, çакса вĕлересси, персе пăрахасси! — хальхи Германин пуçлăхĕсем халăх çинчен каланисенче, вĕсен статьисенче çак сăмахсем питех те час тĕл пулаççĕ. Çав этемсем мĕнпур çĕннине, малта пыраканнине кураймаççĕ. Прогресс, халăхсен ирĕклĕхĕ текен сăмахсем вĕсене йĕрĕнтереççĕ, хăратаççĕ тата çилентереççĕ. Кĕске ăслă, тăмсай пуçлă, çавăнпа пĕрлех тата чее те сĕмсĕр карма-çăварсем,—вĕсем юн ĕçесшĕн çунаççĕ, вĕсем çĕнĕ вăрçăсем кăларма, халăхсене пĕр пĕринпе тытăçтарса юн тăктарма çеç тăрăшаççĕ. Вăрçă вĕсемшĕн — этемлĕх «йĕркеллĕ» пурăнни пулать. Пурнăç вăл—вăрçă, тенĕ сăмаха нимĕç командирĕсем хăйсен çарĕнчи салтаксен ăс-пуçне кĕртсе лартма тăрăшаççĕ, мĕншĕн тесен мирлĕ ĕç фашистла юнлă тискер кайăкăн вилĕмне пĕлтерет; рабочисемпе хресченсене, интеллигентсене вăрçăра вĕлерсе пĕтерни урлă фашистла пуçлăхсем хăйсен вăрă-хурахла, халăха хирĕçле влаçне сыхласа хăварма тăрăшаççĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ тара кĕрĕшсе çынвĕлерекен Гитлер пĕррехинче ним именмесĕрех: «Вăрçă вăл — эпĕ», тесе каланă.

Уççăнах паллă мар-и ĕнтĕ, Гитлер шайкки, нимĕç рабочисене, хресченĕсене, служащисене, ученăйсене, писательсене пинĕ-пинĕпе вĕлерни урлă влаçа хăйĕн аллине çавăрса илнĕ шайка, бандитла меслетсене хăйĕн политикин пĕртен-пĕр хатĕрĕ туса хунă, вăрă-хурахла вăрçă авантюрисенче алхаснă, провокаторсенчен, шпионсенчен, «хупахри политиксенчен», палачсенчен, вăйпа ирĕксĕрлекенсенчен тăракан правительство туса хунă шайка çĕнтерме пултараймасть, эпир ăна пĕтĕм хаярлăхпа çĕмĕрсе тăкса пĕтерĕпĕр!

Фашизм вăл—этемлĕхĕн чи тискер тăшманĕ

Фашизм — пĕтĕм малта пыракан прогрессивлă этемлĕхĕн чи тискер тăшманĕ.

Фашизм — мĕнпур халăхсемпе государствăсен тĕп тăшманĕ, мĕншĕн тесен вăл вĕсене пусмăр, чуралăх, вилĕм кӳрет. Фашистла движени — мĕнпур халăхсен чи усал тăшманĕ. Германири тата Италири хальхи обществăллă стройăн каяшĕсем — фашистсем хăйсен юнлă та ирсĕр ĕçĕсене хутшăнакансене пурне те «аслă расса» вырăнне хураççĕ, çак рассăна вара ытти халăхсене — «кĕçĕн рассăна» имĕш—пăхăнтарма, çав халăхсене пусмăрласа пурăнма пӳрнĕ пулать. Фашизм хăйĕн çарĕн штыкĕсемпе хальхи пĕтĕм цивилизацин çитĕнĕвĕсене пĕтерсе лартать, халăхсен ку таранччен культура енĕпе кĕрешсе илнĕ пĕтĕм çитĕнĕвĕсене, ирĕклĕхĕсене пĕтерсе лартать. Фашизм —халăхсен тăшманĕ; вăл нацисен никама пăхăнмалла мар положенине, халăхсемпе государствăсен пĕр-пĕтĕмлĕхне пĕтерсе хурать, промышленноçа пĕтерет, продовольствин пĕтĕм запасĕсене çаратать, çапла вара, çĕршер пин, миллионшар çынсене выçлăхпа вилĕм кӳрет, — çакна ĕнтĕ Германипе Италия оккупациленĕ çĕршывсен пурнăçĕ лайăх кăтартса парать.

Фашистла правительсен чăн-чăн тĕллевĕ вĕсем хăйсем оккупациленĕ çĕршывсенче — Францире, Чехословакире, Польшăра, Норвегире, Бельгире, Данире, Голландире, Грецире, Югославире, Румынире тата ытти çĕршывсенче тытса пыракан политикăран та лайăх курăнать. Çак çĕршывсенче фашистла войскăсем халăхран конфискацилесе туртса илнĕ апат-çимĕçсемпе куллен кирлĕ таварсене транспорт çине тиесе Германине яраççĕ, çак çĕршывсенчен чĕртаварсене, машинăсене, оборудованисене илсе тухса каяççĕ, мирлĕ халăха нимĕç уйхирĕсенче ĕçлеме пиншер çын хăваласа каяççĕ, вĕсене вара, авалхи саманасенче чурасене кунĕн-çĕрĕн ĕçлеттернĕ пек, саламатсемпе хĕнесе, штыксемпе хăратса кунĕн-çĕрĕн йывăр ĕç тутарттараççĕ; выçă, вăйсăрланса çитнĕ çынсене пăртак хирĕçнĕшĕнех персе пăрахаççĕ, хăйсен «фюрерне» савăнтарма, çавăн пек çынсене хуç тĕлне пулнă пирвайхи йывăç çинех çакса хураççĕ, е тата, концентрациллĕ лагерьсем текен шăршлă шăтăксене кайса пăрахаççĕ.

Оккупациленĕ тата вăрçăпа туртса илнĕ çĕршывсенчи халăхсен тарăхăвĕ вăл — фашистла правительсемшĕн хăрушă вăй. Хĕçпăшал вăйĕпе ирĕксĕрлесе пăхăнтарнă, анчах та ирĕке юратакан халăх ютçĕршыв пусмăрне хирĕç хăйĕн пĕтĕм хаярлăхĕпе çĕкленсе, хăйне чуралантаракансене сирпĕтсе янисем историре сахал мар пулнă. Халăхăн çакнашкал тарăхăвĕ ӳссе пымашкăн вара халĕ сăлтавсем кирлинчен те ытлашшипех.

Чăнахах та, французсен пысăк пайĕ, чышкисене чăмăртаса, кучухнехи варварсене çĕмĕрсе тăкма пĕтĕм чĕререн ĕмĕтленсе, фашистсем Францире мĕнле хуçаланнине астуса тăрать; голландецсем, белгиецсем, датчансем, норвежецсем: фашистла Германие хирĕç тăвăрас шухăшпа пурăнаççĕ. Германире чура вырăнче ĕçлеттерме Бельгипе Данирен вуншар пин рабочисене вăйпа илсе кайни; ялхуçалăх продукчĕсене нимĕçсем хăйсем туса панă тĕлĕнмелле йӳнĕ хакпа туртса илни, çакăн пирки халех ĕнтĕ çак çĕршывсенче хресченсем массăллăн юхăнма пуçлани; оккупациленĕ çĕршывсенче шкулсемпе университетсен администраторĕсем пулма фашист-пуçкасансене лартни, — çаксем пурте вĕсем пусмăрлакансене хирĕç халăхăн пысăк тарăхăвне çĕклентерсе ямасăр тăма пултарайман.

Польша халăхĕ хăйĕн асапĕсемпе хурлăхĕсене нихăçан та манас çук. Пĕтĕм халăх куçĕ умĕнче фашистсем темиçе çĕршер пин поляка тискеррĕн вĕлернĕ; вуншар пин поляк çемьисене хăйсен çуралнă тăван килĕсенчен нимĕçсем хăваласа кăларса янă, вĕсен пĕтĕм пурлăхĕсене туртса илсе нимĕçсене панă; Польша хулисемпе ялĕсенче паянхи кунччченех облавăсем тăваççĕ, хĕрсене тытса пусмăрлаççĕ, вĕсене çĕршерĕн-çĕршерĕн намăс çурчĕсене яраççĕ.

Фашистсем оккупациленĕ ытти çĕршывсенче те — Чехипе Югославире, Грецире Румынире — положени çакăнта асăннă çĕршывсенчи положенирен нимĕнпе те уйăрăлса тăмасть.

Çакăн хыççăн вара епле-ха Европăра тăшман аллине кĕрсе ӳкнĕ халăхсен шухăшĕ, фашизма, Гитлерăн урнă йыттисене пĕтерес килекен шухăшĕ пĕтĕм чĕререн çĕкленмесĕр тăтăр! Епле-ха вĕсен çак вăрçăра фашизма мĕнпур майсемпе пĕтерессишĕн тăрăшас мар!

Паллă мар-и вара, ытти халăхсене пăхăнтарассине тата пусмăрлассине хăйĕн тĕллевĕ вырăнне шутлакан, чуралăха — хăйĕн аслă принципĕ вырăнне, çынна курайманнине тата юн ĕçессине — хăйĕн идеалĕ вырăнне шутлакан фашизм çĕнтерме пултараймасть, эпир ăна хăйне пурпĕрех пĕтерсе тăкăпăр!

Паллă мар-и вара, нимĕç халăхĕ çине тӳсме çук йывăр асап, хĕн-хур янă, нимĕç халăхĕн мухтавлă традицийĕсене кăна мар, тата унăн малта пыракан пĕтĕм туйăмĕсемпе шухăшĕсене те тымарĕпех пĕтерсе пыракан, нимĕç халăхне чурахуçисемпе чурасем çине пайлакан фашистла ирсĕрсен шайкки — Германин хальхи правительсен шайкки — çĕнтерме пултараймасть, эпир ăна хăйне пурпĕрех пĕтерсе тăкăпăр, çĕр çинчен хаяррăн шăлса ывăтăпăр!

Фашизм вăл—культурăн тăшманĕ

Гитлер вăрă-хурахĕсем влаçа илсен, хăйсен «культурăллă» ĕçне мĕнрен пуçланă-ха?

Чи малтан, вĕсем университет библиотекисен, халăх библиотекисен кĕнекисене вута пăрахса çунтарнă. Çавнашкал ĕнтĕ вăтам ĕмĕрсенче Испанири чи усал инквизитор Томас Торквемада пĕтĕм çĕршывран пухса килнĕ кĕнекесемпе алçырăвĕсене вута пăраха-пăраха çунтарнă. Хальхи вăхăтри инквизиторсем — фашистла варварсем те çавăн пекех тăваççĕ: вĕсем 20 миллион ытла кĕнеке çунтарса янă. Пĕр Берлинра кăна вĕсем научнăй кĕнекесене, классикăллă илемлĕ литература кĕнекисене «10 пин центнер» çунтарнă. Çав литературăна малтан полици витисенче йăвалантарнă, унтан вара Берлинăн тĕп площачĕсенче вутра çунтарнă. Анчах та Горькипе Барбюс произведенийĕсене, Гейнепе Гюго произведенийĕсене, Ромэн Роллан, Людвиг Ренн тата ытти писательсемпе ученăйсен произведенийĕсене çунтарни фашистсен ĕçĕн пуçламĕшĕ çеç пулнă. Фашистла иезуитсем, наукăран тата малта пыракан литературăран хăраса, Гитлерăн «интеллигенци вăл — нацин каяшĕ» тенĕ сăмахĕсене тĕпе хурса, вуншар ученăя, литератора тискеррĕн вĕлернĕ. Эйнштейна, Манна, Фейхтвангера, чи лайăх композиторсене, дирижерсене, режиссерсене, художниксене Германирен хăваласа янă. Фашистсем еврей халăхне вĕлерсе пĕтермелли погромсене организациленĕ, «тулли хаксăр çынсене» стерилизаци тăвасси çинчен закон кăларнă тата ыттисем те.

Аслă шкулсен, пысăк библиотекăсен, шкулсен пуçĕнче тăракан фашистла полици чиновникĕсем Франкфуртри университетăн ректорĕн сăмахĕсемпе çакăн пек каланă: «пирĕн университетри вĕренĕвĕн задачи — объективлă наука мар», «салтак науки» пулать тенĕ. «Çутĕç» министрĕ çапла калать: «Пăхăнса тăни вăл — ахаль çыннăн чи лайăх пахалăхĕ. Вăл мĕн чухлĕ ăсăланать, унăн пăхăнса тăрас шухăшĕ вара çавăн чухлĕ сахалланса пырать», тет.

Çапла, фашистсен пуçлăхĕсем хăйсемех: çынсем мĕн чухлĕ ухмахрах, фашизмшăн çавăн чухлĕ лайăхрах, усăллăрах, теççĕ. Çĕрпе пĕлĕт, çурçĕрпе кăнтăр, çутăпа тĕттĕмлĕх пĕрпĕрне хире-хирĕçле тăнă пекех — фашизм та ăстăнлăха хирĕç, наукăна, культурăна хирĕç тăрать, фашизм тата культура тенĕ ăнланусем пĕр-пĕринпе нимĕнле те килĕшсе тăма пултараймаççĕ. Ку тĕлĕшпе фашистла политикăпа «идеологин» пĕтĕм ирсĕр те киревсĕр содержанийĕ пĕлĕве, культурăна хирĕç тăрать. Сăмах май аса илер, ун çинчен Геббельс хăех çакăн пек каланă: «Ăспуç вăл — характера туса йĕркелес çĕрте хăрушлăх пулса тăрать... Ăстăн таврашĕсем пурте мана йĕрĕнтерсе çитерчĕç, пичетри кашни сăмахранах манăн хăсас килет».

Çакăн пек ĕнтĕ фашистсем нимĕç халăхĕ валли «çутта кăларас тĕлĕшпе» тунă ĕçсен результачĕсем, «пĕлӳ çине ылханса пăхнин тата шухăшлав çине кураймасăр пăхнин» результачĕсем.

Çакă паллă мар-и вара: аслă шкулсенче вĕренессине пĕтерекен (Германире 30 пин çын ытла инженерсем çитмеççĕ!) çĕршыв, библиотекăсене хупакан, çынна çын кураймасăр пурăнас шухăша саракан, чи паллă ученăйсемпе писательсене хăйĕн патĕнчен хăваласа яракан çĕршыв çĕнтерме пултараймасть, вăл пурпĕрех пĕтсе ларать!

Фашистла тискерлĕх тĕп пулать

Темиçе çул каярах Горький çапла каланă: Германире историн каяшĕсем, XIX ĕмĕр пуçламĕшĕнчи пек, каллех салтака тĕнчене çĕнсе илекен вырăнне хураççĕ, — тенĕ.

Салтака çавнашкал вырăна тăратассине Германире пирвайхи хут мар тăваççĕ. Анчах урăх историллĕ обстановкăра та, нимĕçсем аслă совет халăхĕпе унăн паянхи паттăр Хĕрлĕ Çарĕ пек никам çĕнейми хăватлă вăйпа тĕлпулман чухне те, вĕсене Чудски кӳлĕ çинче те, Берлин таврашĕнче те, Украина уйхирĕсенче те çĕмĕре-çĕмĕре тăкнă.

Тăшман вăйлă та тискер иккенне пирĕн халăх лайăх пĕлсе тăрать. Унпа кĕрешме халăхăн тата çарăн мĕнпур вăйне хурас пулать. Анчах эпир хамăр çĕнтерессе шанса тăратпăр.

Пуçкасан фашистсем хăйсене тĕнчере хуçа пулма тивĕçлĕ «аслă расса» теççĕ.

«Аслă расса»!

Кучухнехи варварсем валли нимĕнле Мольер та кунран ытла мăшкăллă, сивĕч эпитет шухăшласа тупайман пулĕччĕ.

«Аслă расса» вăл — гомосексуализма, аскăнлăха, проституцие официальнăй йĕркепе сарса пыни;

«Аслă расса» вăл — этем йĕркинчен тухнă инстинктлă, юн ĕçсе тăранайми кучухнехи бандитсен ячĕ;

«Аслă расса» вăл — вĕренĕве ăнран яракан муштрăпа улăштаракан, наукăна—казармăпа, художнике — салтакпа, медицинăна — юмăçпа, этем ăстăнне— ăсран кайнă çын аташăвĕпе улăштаракан «расса»;

«Аслă расса» вăл — халăх массисене нимĕнле ирĕксĕр, чунсăр выльăх, механически ĕçлекенсем, чурасем туса хума тăрăшакан кучухнехи каннибалсен «идеологийĕ».

Гитлерăн алйыттийĕ пулнă Отто Штрассер, Германирен тухса тарнăскер, нумаях пулмасть «Ыранхи Германия» ятлă кĕнеке кăларнă. Пуçпулса тăракан Гитлер шайккине, çавнашкалах тата нимĕçсен çарне те вăл начар пĕлĕт теме çук. Çак çын вара пысăк вăрçăра гитлеризм çине пит шансах каймасть. Штрассер çапла çырать: «Гитлерпа унăн аркату системине пĕтерсе лартасси, çак вăрçăра аркату вăйĕсене пĕтерсе лартасси вăл—Гитлер влаçа илни пекех, çак вăрçă пуçланни пекех паллă япала».

Кунта урăх ним те хушма кирлĕ мар.

Штрассер фашистла Германие Совет Союзĕн паттăр çарĕ пĕтерсе хурасса çеç калаçа пама пултарайман.

Пысăк тарăхупа пырса çапать Хĕрлĕ Çар тăшмана. Гитлер провокацине хирĕç пирĕн пĕр ответ çеç пулма пултарать, Маяковскийĕн çилĕллĕ сăмахĕсенче çав ответа уççăн каланă:

Çĕр чăмăрĕн
пур енче те
ĕçри лозунг
пултăр çакăн пек:
Фашистсемпе
калаçăр —
Вут-хĕмсен,
Пульăсен,
Штыксен
çивчĕ чĕлхипе.

Совет халăхĕпе унăн аслă, хăватлă Хĕрлĕ Çарĕ тискер тăшмана виçĕ хут, вунă хут пысăк вăйпа çапса ответлĕç. Фашистла тискерлĕхе тĕп тăвăпăр!

Г. АЛЕКСАНДРОВ.

(«ПРАВДА» хаçатран).

ХАЛĂХА ПĔЛСЕ ТĂМА

Вут чĕртсе яракан авиабомбăсене мĕнле сӳнтермелле

Вут чĕртсе яракан авиабомбăсене сӳнтермелли тĕп средство шыв пулса тăнине практикăра çирĕплетсе панă.

Вут чĕртсе яракан бомбăсене çакăн пек майсемпе сӳнтерме тата пĕтерсе хума сĕнеççĕ:

а) сирпĕтекен шывпа;

б) авиабомбăсене шыва путарнипе е вĕсене çуртсенчен кăларса ывăтнипе;

в) комбинированнăй майпа.

Вут чĕртсе яракан авиабомбăсене шывпа сирпĕтсе сӳнтерес техника çакнашкал: боец пушар кранĕн стволне илет те бомба çывăхне 5—10 метр пырать, малтан бомба çывăхĕнчи е унăн айĕнчи çунакан япаласем çине шывпа сирпĕтме пуçлать, унтан бомба корпусĕ çине сирпĕтме тытăнать. Шыва çунакан вырăна сӳнтерсе лартиччченех парса тăмалла.

Çунса выртакан авиабомба çине шыв тивнипе сиксе кайсан е зврывсем пулсан, шывпа сирпĕтсе тăракан çынна хӳтлемелле тăвас пулать, шыва тĕрлĕрен маневрсем туса сирпĕтес пулать, бомбăн шăранса шăтнă хушшисенчен вут чĕртсе яракан веществосен хĕрсе кайнă пайĕсене çывăхри япаласем çине сиксе ӳкме пама юрамасть.

Электроннăй авиабомбăсене шывпа сирпĕтсе сӳнтернĕ чухне çакна шута илмелле: шыв бомба корпусĕ çине тивсен малтанах пысăккăн сиксе каять, анчах та çакă вăл шыва сирпĕтсе тăракан çын хӳтлĕхпе усă курмасăрах çунакан япалана сӳнтерме пултарать.

Вут чĕртсе яракан пĕчĕк калибрлă авиабомбăсене, 200 грамран пуçласа 10 килограма çити таяканнисене, вĕсем пушар кранĕсем çук çуртсем çине ӳкнĕ пулсан, çав бомбăсене шыва путарса сӳнтереççĕ. Çакна тума акă мĕн кирлĕ: запасра шыв тытса тăнисĕр пуçне хваттерсенче тата çуртсемпе сооруженисен çӳлти этажĕсен пусма картлашкисем çинче пушар сӳнтермелли юрăхлă хатĕрсем тата типĕ хăйăрпа тултарнă ещĕксем пулмалла.

Вут чĕртсе яракан авиабомбăсене шыва путарса сӳнтерес тата кăларса ывăтас принцип боецсенчен ытлашши пысăк хăнăхувах ыйтмасть. Çунса выртакан авиабомбăна курсан, пушара хирĕç кĕрешекен звено боецĕн бомба хӳри патне пымалла та, алса е перчатка тăхăнса ăна е стабилизатортан ярса илмелле е лутук евĕрлĕ кĕреçепе илмелле.

Бомбăна илсен, ăна витрепе илсе пынă шыв ăшне е шыв тултарнă пичке ăшне пăрахмалла. Çакăн хыççăн вут чĕртсе яракан веществосен çунакан пайĕсене е вут чĕртсе яракан веществосен хĕрсе кайнă продукчĕсене лутук евĕрлĕ кĕреçесемпе хăйăрпа тултарнă витре ăшне пуçтарса илмелле.

Вут чĕртсе яракан пĕчĕк калибрлă авиабомба чӳречесемпе алăксем çывăхне ӳкнĕ пулсан, ăна çӳлте асăннă майсемпех çуртран урăх çĕрелле кăларса ывăтмалла.

Çакна палăртнă: вут чĕртсе яракан пĕчĕк бомбăсене алăсемпе аяккалла кăларса пăрахма хăрушă мар, пачах урăхла, вăл çунакан япалана сӳнтерес ĕçе лайăх йĕркелеме пулăшать.

Çӳлте кăтартнă майсемпе вут чĕртсе яракан пысăк мар калибрлă авиабомбăсене кăна (10 килограма çити таяканнисене) сӳнтерме сĕнеççĕ, вĕсене 15—20 литр таран шыв кĕрекен йывăç пичкесем, каткасем ăшне пăрахса сӳнтерме сĕнеççĕ.

Вут чĕртсе яракан бомба çуртăн çунма пултаракан конструкцийĕ çине лакса ларнă пулсан кăна комбинированнăй майпа усă кураççĕ. Çавăн пек бомбăна куракан боец тӳрех сигнал парать, çав сигнал тăрăх самозащита группин пĕтĕм составĕ пушар пулнă вырăна пухăнать. Личнăй состав пушар пулнă çĕре пухăннă хушăрах пушара сӳнтермелли средствăсемпе хатĕрсене (кĕреçесем, хăйăр, ломсем, пуртăсем, пăчкăсем, пусмасем, витресемпе шыв тата ыт. те) илсе пыраççĕ.

Пушара сӳнтерес ĕçе ертсе пыракан боецăн вут сарăлма пултаракан тĕп вырăнсене тĕрĕс палăртмалла, авиабомба лакса ларнă вырăн патĕнчи конструкцисене хăвăрт сӳтсе пăрахассине организацилемелле тата вута сӳнтерекен средствăсене вăхăтра ĕçе ямалла.

Вута сӳнтерекен средствăсемпе çакнашкал майсемпе усă курас пулать:

а) вута перегородкăсем хушшине, этажсем хушшине тата вентиляци коробкисем çине сарăлма памалла мар;

б) авиабомбăна конструкцирен кăларса илмелле е ăна типĕ хăйăрпа çавăнтах сӳнтерсе лартмалла;

в) вут чĕртсе яракан веществон сирпĕннĕ юлашкийĕсене тата çунса хĕрнĕ продукчĕсене пушар пулнă вырăнтан аяккалла пĕлсе пăрахас пулать;

г) вут чĕртсе яракан авиабомба кӳнĕ сиенсене пĕтĕмĕшпех пĕтермелле.

Вут чĕртсе яракан бомбăсене çӳлте асăннă мĕнпур майсемпе сӳнтернĕ чухне хăрушсăрлăх правилисене обязательнăй йĕркепех пăхăнас пулать. Вут чĕртсе яракан авиабомбăна сӳнтерекен кашни боецăн хăйне пĕçертесрен сыхланас шутпа, пуçа брезентран çĕленĕ капюшон тăхăнмалла, куçлăх тăхăнмалла, алсене брезентран е сăранран çĕленĕ алсасем тăхăнмалла.

ФАБРИКĂСЕМПЕ ЗАВОДСЕНЧЕ, ХИРСЕНЧЕ ГЕРОЙЛА ĔÇЛЕСЕ,
Хĕрлĕ Çара çĕнтерӳ тума пулăшар!

☆ ★ ☆

Пĕтĕм вăй-хала оборона ĕçне

ÇĔМĔРЛЕ. Июлĕн 4-мĕш. (**Телефон тăрăх, хамăр корр.**). Оборонăн Государственнăй Комитет Председателĕ И. В. Сталин юлташ радио тăрăх тухса каланă сăмаха хулари ĕççыннисем тимлĕн итлерĕç.

Июлĕн 3-мĕшĕнче древкомбинатра кăнтăрлахи апат вăхăтĕнче пур цехсенче те митингсем пулса иртрĕç. 4-мĕш номерлĕ цехра группорг Грачев юлташ митинга уçса ВКП(б) райкомĕн секретарьне Павлов юлташа сăмах пачĕ. Павлов юлташ хăйĕн сăмахĕнче çапла каларĕ:

— Сталин юлташ пире Ленин—Сталин партийĕ тавра татах та таччăнрах пĕтĕçсе, организованно, дисциплинăллă пулма чĕнет. Пирĕн задача — производствăра нихăçанхинчен те лайăхрах ĕçлесе, хаяр тăшмана çапса аркатма Хĕрлĕ Çара пулăшса пырасси пулать.

Ун хыççăн цехри паллă стахановец Свиягин юлташ сăмах илчĕ.

— Фашистла бандитсем пирĕн телейлĕ тăван çĕршыв çине вăрă-хурахла, намăса пĕлмесĕр вăрçăпа тапăнчĕç, — тет вăл. — Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар ирсĕр тăшмансене пĕр хут кăна мар çапса çĕмĕрнĕ, халĕ те çĕлен-калтасене тĕппипех çапса хуçĕ. Хĕрлĕ Çара пулăшса пыма тылра та яланах хатĕр пулмалла. Эпĕ сире производствăра стахановла ĕçлеме, çар ĕçне вĕренме чĕнетĕп. Çĕнтерӳ пирĕнте пулать. Вилĕм юнлă фашистсене!

— Эпир тăван Хĕрлĕ Çара пулăшма яланах хатĕр. Кирлĕ пулсан, 8 сехет хушши кăна мар, талăкĕпех ĕçлеме те хатĕр, — терĕ 3-мĕш цехра пулнă митингра Бехтяева стахановка.

Рабочисемпе работницăсен, служащисен тата инженерно-технически работниксен митингĕсенче пурте пĕр çын пек пулса çакăн пек резолюци йышăннă.

Оборонăн Государственнăй Комитет Председателĕ Сталин юлташ пире, Совет халăхне, Ленин—Сталин партийĕ тавра татах та таччăнрах пĕтĕçме чĕнет. Эпир, юратнă Сталин юлташ тавра пĕтĕçсе, нихăçанхинчен те лайăхрах ĕçлеме, организованно пулма, тăван Хĕрлĕ Çара пулăшса пыма тупа тăватпăр.

Оборонăн Государственнăй Комитечĕн требованийĕсене эпир йăлтах пурнăçлатпăр. Кирлĕ пулсан, Хĕрлĕ Çар ретне пурте пĕр çын пек тăрса, Гитлерăн вăрă-хурахĕсене çапса аркатма яланах хатĕр. Хамăр çĕршыва, ирĕклĕхе сыхлатпăр.

Пирĕн ĕç — тĕрĕс ĕç. Тăшман пĕтмелле. Çĕнтерӳ пирĕнте пулать.

Сывă пултăр никам çĕнтерейми хăватлă Хĕрлĕ Çар!

Сывă пултăр юратнă çулпуç Сталин юлташ!

Плана 200 процент тултарнипе ответлеççĕ

ИЕПРЕÇ. И. А. Моторин коммунист мухтавлă ĕçпе паллă пулса тăрать. Вăл халь ӳссе çитĕннĕ çамрăк руководитель. Ĕçшĕн чĕререн çунса ĕçлекен коммунист. Мĕнпур шухăшĕ, интересĕ унăн юратнă тăван çĕршывшăн, пĕтĕм халăхшăн чыслă ĕçлесси.

Вăл Буинскри алăсталăх артелĕн председателĕ пулса ĕçлет. Халăх шанса панă ответлă ĕçе тĕрĕссе кăларас тесе пĕтĕм вăйне хурать. Артель членĕсемпе тачă çыхăнса ĕçлени ĕçе лайăх организацилеме май парать.

Ĕçре вăл пĕртте иккĕленмест, хăрамасть, нăйкăшмасть. Артель коллективĕ квартал пуçламăшĕнчех производство планне срокчен тултарма обязательство илнĕ. Илнĕ обязательствăна чыслăн пурнăçланă май Чкаловскри «Мотор» алăсталăх артелĕпе социализмлă ăмăртăва тухнă. Унсăр пуçне кашни пехпа цех, рабочипе рабочи ăмăртса ĕçлеççĕ.

Ĕçе большевикла организациленине пула артель çурçул планне срокченех 137 процент тултарчĕ. Стахановецсен шучĕ ӳссех пырать. Çулталăк пуçламăшĕнче 9 стахановец пулнă пулсан халĕ 14 стахановеца çитнĕ.

Стахановецсенчен уйрăмăнах К. Кутарева, Ю. Мельникова, Е. Кирпеянцева, П. Родионова, А. Слугина юлташсем аван тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеççĕ.

К. Кутарева стахановка артель пуçланнăранпах унта ĕçлет. Вăл — тĕрĕ тĕрлес ĕçĕн мастерĕ. Кулленхи нормăна 160—165 процент тултарать. Ăна çулсеренех премилеççĕ. Аван ĕçленĕшĕн ăна 1941 çулта Всекомпромсоюз грамота парса наградăланă.

Артель членĕсем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе аван йĕркеленĕ. Вăл ĕçе культсовет ертсе пырать. Агитаторсем тăрăшса ĕçленине пула XVIII партконференци решенине кашни артель членĕ патне çитерсе, вĕсене социализмлă ăмăртăва хутшăнма пулăшнă. Ăнлантарӳ ĕçне производство ĕçĕпе çыхăнтарса пыраççĕ.

Артель членĕсем тăван çĕршывăн оборонине тĕреклетес, Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ Флота усал тăшмана — фашистсене çĕнтерме пулăшас май ăмăрту ĕçне вăйлатса, çулталăк планне 200 процент тултарма пулса обязательство илнĕ.

В. ВИШНЕВСКИЙ.

Малта пыракан артель

ШĂХАСАН. Шуркассинчи çĕвĕ çĕлекен артель районра малта пыракан артельсенчен пĕри шутланать. Вăл производствăллă плана уйăхран уйăха ытлашшипех тултарса пырать. Июнĕн 25-мĕш тĕлне ку артель çур çулти плана ытлашшипех тултарнă. Артельри уйрăм членсем Николаев, Гурьева, Иванова, Никитин, Антонов т. ыт. те ĕç нормине кулленех 150—170 процент таран тултарса пыраççĕ.

А. СОЛОВЬЕВ.

☆

Кашни колхозăн шыв хуçалăхĕ пултăр

ШĂХАСАН. Воронеж облаçĕнчи Таловски районри «Железнодорожник» колхоз членĕсем шыв хуçалăхне йĕркене кĕртесси çинчен чĕнсе каланă хыççăн, пирĕн районри чылай колхозсем çак ĕçе пикенсех тытăнчĕç. Иртнĕ çулта шыв хуçалăхне йĕркелес ĕçе районри колхозниксемпе колхозницăсем пилĕк пин çын ытла хутшăннă. Пĕр çул хушшинче техникăллă проектсем тăрăх 11 плотина тунă, вĕсем 28 гектар йышăнаççĕ. Кусемсĕр пуçне çĕнĕрен 33 çăл тунă, киввисене 46 çăл юсанă.

Халĕ кашни колхозрах плотинасемпе пĕвесем пур. Шыв хуçалăхĕ колхозсене пысăк усă парать. Районри колхозсен пĕвисенче 38 гектарлă шыв лаптăкĕ çинче пулăсем ĕрчетме тытăннă. «Красноармеец», «Новый путь», «Правда» тата ытти колхозсем çулсеренех пулă сутса сахал мар тупăш илеççĕ, колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх валеçсе параççĕ.

Колхозсенче шыв хуçалăхне йĕркене кĕртни выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тата вĕсен продуктивлăхне ӳстерес тĕлĕшпе пысăк вырăн йышăнса тăрать. Сталин ячĕпе тăракан колхозра çĕнĕрен тунă кӳлĕ мĕнпур выльăхсене шăварса тăма май парать. Кӳлĕсенчи шывсемпе пахча-çимĕçсене шăварнă çĕрте сарлакан усă кураççĕ.

«Звезда», «Красный Октябрь» тата Ильич ячĕпе тăракан колхозсем кăçал кашниех пĕрер плотина турĕç. Калинин ячĕпе тăракан тата «Победа» колхозсем те çак кунсенче тепрер плотина туса çитереççĕ. Районĕпе кăçал çĕнĕрен 21 çăл тунă, 15 çăл юсанă. Кӳлĕсем таврашне 1500 тĕп йывăç лартса хăварнă.

Ф. КАТКОВ.

Колхозри пĕвесем

ИШЛЕЙ. «Çĕнĕ хунав» колхоз колхозникĕсем иртнĕ çулта пысăк пĕве турĕç. Халĕ çав пĕве хысĕнче сипсимĕс курăк ешĕрет, пĕве пуçĕ урлă лашасемпе каçса çӳреççĕ. Ку пĕве çӳллĕшĕ 12 метр, лаптăкăшĕ 3,75 гектар йышăнать. Колхозниксем кунта пулă ĕрчетеççĕ.

Колхозăн хур ферми пур, унта хурсем ĕрчетме лайăх. Пĕвен пĕр енĕнче колхозăн пахча-çимĕçсем ешĕрсе лараççĕ, тепĕр енче—ĕне, сысна, чăх, сурăх фермисен çурчĕсем, колхозăн тырă склачĕсем лараççĕ.

«Çĕнĕ хунав» колхоз кăçал кĕпесем çумалли, кантăр хутмалли пĕвесем тăвать. Кунсăр пуçне тата карп ĕрчетме ятарласа уйрăм пĕве тăваççĕ.

Шыв хуçалăхне вăйлатас тĕлĕшпе лайăх ĕçлекен колхозсем районра татах та пур. Свердлов ячĕпе тăракан колхоз иртнĕ çулта вунă метр çӳллĕш пĕве пĕвелерĕ. Ку пĕвере вĕсем карп ятлă пулă ĕрчетеççĕ.

«Восток» колхоз та пулăсем нумай ĕрчетет. Ку колхозра кашни çулах уборка вăхăтĕнче пĕрле апатланнă çĕрте усă курма хăйсен пĕвинчен пулă пĕрер тонна таран тытаççĕ.

Районра шыв хуçалăхне вăйлатакан колхозсен хисепĕ ӳссех пырать. Шетмĕпуç ялсоветĕнчи колхозсем кăçал 10 пĕве пĕвелеме палăртнă.

Ф. ТУРХАНКАЙ.

☆ ★ ☆

Кадрсен вучахĕ

Илемлĕ уçланкă. Йĕри-тавра симĕс вăрман. Çак вырăнта çĕнĕ, халь çеç ӳсекен поселок вырнаçнă. Поселокра шкул, клуб, магазин, столовăй, рабочисем пурăнакан çуртсем тунă.

Çак поселокра вăрман промышленноçĕн тăваттăмĕш номерлĕ ФЗО шкулĕ ĕçлет. Вăл çĕнĕ кадрсем хатĕрлет. Ку шкул апрель уйăхĕнче ĕçлеме тытăннă. Партипе правительство ĕç вăйĕсен резервисене хатĕрлесси çинчен йышăннă постановленине пĕтĕм чĕререн ырласа, колхоз çамрăкĕсем çĕнĕ ФЗО шкулне килсе кĕрсе, пысăк тимлĕхпе вĕренме тытăннă. Ку шкулта Çĕмĕрле, Элĕк, Шăхасан тата Сĕнтĕрвăрри районĕсенчи çамрăксем вĕренеççĕ. Колхозсем çĕнĕ шкула чи лайăх, ĕçе юратакан маттур çамрăксене янă.

Çамрăксене пысăк опытлă çынсем вĕрентеççĕ. Вĕсем вăрман касаççĕ, йывăççене сортлаççĕ, клепкăсем тăваççĕ. Пуртă аврисем туса лартма, пуртăсемпе пăчкăсене юсама та вĕреннĕ вĕсем.

Чылай çамрăксем, икĕ уйăх хушши вĕренсе, производство процесне хăнăхса çитрĕç. Акă, вăрман касакансен тăваттăмĕш бригадине Турханти «Комбинат» колхозран килнĕ çамрăк М. Илькачкин ертсе пырать. М. Илькачкинăн ашшĕ те тата асламăшĕ те вăрманта ĕçленĕ. Çакна кура вăл та вăрманта ĕçлеме шут тытнă. Ялти шкулта вĕреннĕ вăхăтрах лесничествăна кайса хыр лартнă, е вăрман таснă, час-часах вутă турттарнă. Халĕ вăл шкулта вăрман ĕçне вĕренет. Лучковăй, крискот пăчкăсемпе ĕçлеме тата вĕсене юсама, вутă турттарма вĕренсе çитнĕ те ĕнтĕ. Унăн бригадинчи И. Васьянов (Егоркинăри «Большевик» колхоз членĕ) лучковăй пăчкăпа кулленех 3—4 кубометр вутă татать.

— Эпĕ лайăх лучкист пулатăп,—тет Васьянов.

М. Михайлов, М. Матвеев юлташсем те лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Илькачкин ертсе пыракан бригадăра инструментсене тирпейлĕ пăхса усраççĕ.

— Малтанах çын пуçне пĕр кубометртан ытла татаймастчĕç, халь çын пуçне 3—4 кубометр тататпăр,—тет Илькачкин юлташ.

Т. Евдокимов ертсе пыракан бригада уйрăмăнах лайăх тĕслĕхсем кăтартать. Ку бригадăра Элĕк районĕнчен килнĕ çамрăксем. Т. Евдокимов лучковăй пăчкăпа 30—35 сантиметр хулăмĕш хырсене 10—15 минута хушшинче лайăх пахалăхпа касса ярать.

Лайăхран та лайăх тĕслĕхсем кăтартать возчиксен группи. Ку группăра ВКП(б) членĕ, мастер А. Пикселькин юлташ ачасене тĕплĕн вĕрентет, çавăншăн ăна вĕренекенсем те юратаççĕ.

Ку группа кулленхи нормăна нумай ирттерсе тултарать. Возчиксен группинчен В. Колесов, В. Кириллов, Н. Семенов, Яицников, Дубов, Ефремов юлташсем хăйсен кулленхи нормине 150—160 процент тултарса пыраççĕ.

Вĕренекенсем валли лайăх общежитисем хатĕрленĕ. Кунта таса, илемлĕ. Кашниннех койка, çемçе вырăн. Пӳлĕмсенче çулпуçсен сăнĕсем, лозунгсем, плакатсем.

Çамрăксем пушă вăхăтра тĕрлĕрен художествăллă произведенисем вуласа, хăйсен пĕлĕвне, культурăлăхне хăпартаççĕ. Т. Евдокимов шкул библиотекин заведующийĕ. Вăл Островский çырнă «Как закалялась сталь», Тургенев çырнă «Отцы и дети», Гоголĕн «Ревизор», Гончаровăн «Обломов» тата ытти произведенисене вуланă. И. Ичаков, Л. Дмитриев, В. Ефимов 10-шар произведени вуласа тухнă.

С. БАТЬКОВ.

Колхоз тырпулсене пухса кĕме хатĕр

КАНАШ. Çĕнĕ Шелттемри «Красная звезда» колхоз тырпулсене пуçтарса кĕме хатĕрленсе çитрĕ. Уборка машинисене пурне те юсанă. Кашни лаша пуçне икшер урапа тивет. Колхозра 4 бригада. Кашни бригада 300-шер михĕ çĕнĕрен хатĕрленĕ. Пур бригадăсенче те икшер безтарок, пилĕкшер рыдван туса хунă.

Колхоз уборка вăхăчĕ пуçланиччен тĕрлĕ строительство ĕçĕсене туса çитерме палăртнă. Колхозра халĕ строительство ĕçĕсем хĕрсех пыраççĕ.

Агроном С. ГРИГОРЬЕВ.

Ташкент облаçĕнчи (Узбек ССР) колхозсем государствăна тĕштырă тăратма пуçланă. УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Хавастски районри Ахунбабаев ячĕпе тăракан колхоз колхозникĕсем тулă параççĕ.

В. Лейн фото-ӳкерчĕкĕ. (ТАСС фотохроники).

☆

Фермăра

ИШЛЕЙ. Кăнтăрла умĕн шăпăртатса çумăр çурĕ. Сывлăш уçălса карĕ. Тӳлек. Мамăш ялĕ витĕр тухрăмăр та, анаталла пыратпăр. Çулăн икĕ енĕпе колхозсен уйхирĕсем, ешĕл симĕс улăхсем...

— Лере пирĕн колхоз калчи,—пӳрнипе тĕллесе кăтартать лавçă хăях пек кашласа ларакан ыраш калчи çине. — Унтан кунтарах, шыв хĕррипе, выльăхсем çӳремелли вырăн. Вăн, унта колхоз кĕтĕвĕ çӳрет. Улăх пысăках мар пулсан та, çĕр нӳрĕ тăнипе выльăхсене çитерме курăк çителĕклĕ.—Çавăн пек каласса пынă хушăрах Аначкасси ялне çитнине те сисмен эпир.

Таса та илемлĕ ял. Колхозниксен пӳрчĕсем умĕнче çырла йывăççисем. Ăçта пăхнă унта улмуççи, чие çырли, слива тата çĕмĕрт куçа илемлĕн курăнаççĕ. Чӳречесем умĕнче кашниннех занавескăсем çакăнса тăраççĕ. Такăр çул тăрăх кăшт сĕвекрех вырăна улăхса çитсен, хулари пек илемлĕ те пысăк çурт курăнса каять. Эпир çак çурт умне çитсе чарăнтăмăр. Ку—колхоз клубĕ. Кунтах колхоз правлени вырнаçнă. Пире хирĕç клубран 2 çын тухрĕç. Палласа илсе, алăсене тытрăмăр. Пĕри, кăвак костюм тăхăнни, колхоз председателĕ Петр Семенч—илемлĕ те вăрăм çын, тепри—хура фуфайка тăхăнни ĕне фермин заведующийĕ Кирилл Федорч. Кăмăллă çынсем. Вĕсенчен эпир фермăна илсе кайма ыйтрăмăр.

Мамăшпа Аначкасси урамĕсем вĕçĕнче, çерем çинче, «Коммунист» колхозăн тăватă çул каялла туса лартнă ĕне вити курăнса ларать. Унта пурĕ 51 ĕне вырнаçмалла. Вăрăм витеваррипе икĕ рет шултра юпасем лартса тухнă. Юпа речĕсем хушшинче тӳрĕ коридор. Коридор икĕ енĕпе те ĕне тăмалли вырăнсем. Кашни ĕне тăнă тĕле унта тăракан ĕне ятне тата вăл кунне миçе литр сĕт панине çырса хунă. «Катя»—5 литр, «Дочка»—7 литр. Витене тасатсах тăраççĕ.

Ĕне витипе юнашарах тепĕр пĕчĕкрех пӳрт курăнать. Ăна ĕне пăхакансем валли лартнă. Чӳречесем умĕнче чечексем ешĕреççĕ. Чӳречесем çине, çӳле, çӳçеллĕ чипер чĕнтĕр карса хунă. Унтан аяларахра шап-шурă занавескăсем.

Вăхăт каçалана сулăнчĕ. Ĕнесем кĕтӳрен таврăнчĕç. Икĕ хĕрарăм Евдокипе Варвари сĕт-турăх тирпейлемелли пӳлĕмрен каласкаласа тухрĕç. Иккĕшĕ те шурă халат тăхăннă, пуçĕсене хĕрлĕ тутăр çыхнă. Кашниех икшер тимĕр витре çĕкленĕ.

Ĕнесене суса пĕтернĕ май, пире ферма заведующийĕ хăйсен ĕçĕ çинчен каласа пама тытăнчĕ.

— Эпир фермăна колхоз пуçлансанах организацилерĕмĕр. Фермăн малтанхи ĕçĕсене хальхипе танлаштарма та çук. Колхоз фермăран кашни çулах пысăк тупăш илет.

...Эпир вăтам шутпа кашни ĕнерен 1500—1600 литр, уйрăм ĕнесенчен 2000—2500 литр сĕт суса илме тăрăшатпăр. Çакна эпир пурнăçа кĕртетпĕрех.

А. КОЛЕНОВ.

Кантăр тухăçлăхне ӳстерер

ВКП(б) XVIII съезчĕ колхозсенче техникăллă культурăсем акса тăвас ĕçе пысăккăн ӳстерсе пыма хушса хăварни кантăр акса тăвакан колхозсемшĕн тĕп программа пулса тăчĕ. Халĕ пирĕн республикăра кантăр акса тăвакан колхозсемпе стахановла звеносем темиçе çĕршерĕн шутланаççĕ. Канаш районĕнчи «Красная звезда» тата Калинински районри Калинин ячĕпе тăракан колхозсем пысăк тухăçлă кантăр туса илсе, хăйсен чаплă ĕçĕсене 1939 çулта Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкинче кăтартса пама тивĕçлĕ пулчĕç. Елчĕк районĕнчи «Осоавиахим», Çĕрпӳ районĕнчи «Ĕмĕт» колхозсем уяр çанталăклă çулсенче те гектартан 8-шар центнер таран кантăр сӳсĕ, çавăн чухлех кантăр вăрри туса илекен пулчĕç.

Партипе правительство техникăллă культурăсен заготовкипе закупкине ирттерес ĕçре çĕнĕ йĕрке туни йĕтĕн-кантăр акса тăвас тĕлĕшпе малта пыракан колхозсене вĕçĕмсĕр хавхалантарса пырать. Елчĕк районĕнчи «Осоавиахим» колхоз государствăна планран ирттерсе сӳс панăшăн 100 пин тенкĕ тупăш илет. «Осоавиахим» колхоз тухăçлă кантăр туса илес тĕлĕшпе районра чи малта пыракан колхоз шутланать. Вăл çулленех пысăк тухăçлă кантăр туса илет. Ку колхоз кăçал та кашни гектартан вăтам шутпа 8 центнертан кая мар кантăр вăрри туса илес задача лартнă. Кантăр акса тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен звенора опытлă колхозниксем тăраççĕ, вĕсем хăйсен ĕçĕсене лайăх пĕлеççĕ.

«Осоавиахим» колхозра кантăра сеялкăпа, хресле майпа акнă. Кантăр акмалли участоксене лапамлă тата шыв илекен вырăнсенче уйăрнă.

Кантăр акса тăвакан звенори колхозниксем пысăк тухăçлă кантăр туса илесси ĕçе юратса тунинчен килнине лайăх ăнланаççĕ. «Осоавиахим» колхозăн кантăр акнă вырăнсенче çумкурăксем пачах çук, вĕсене çийĕнчех çумласа тăраççĕ.

Н. МАЛЬЦЕВ.

Колхозри агротехник

Колхоз уйхирĕсем сарлака та аслă. Ыраш уйĕ тинĕс пек хумханса ларать. Вăйлă тырпул ӳсет колхоз уйхирĕсенче. Колхоз тырпулĕ таса, çумкурăксем те сахал. Çавах та колхозниксем уя ирех тухнă, вĕсем хăйсен звенисен участокĕсенче çумкурăксене тасатаççĕ.

Колхозри агротехник Архип Яковлевич Михеев уйсене пăхса çӳрет, вăл кашни бригадăн, звенон участокĕсенче пулать, тырăсене пăхать, вĕсене хаклать, бригадирсемпе, звеньевойсемпе, колхозниксемпе калаçать.

Архип Яковлевич йывăçсем хушшинче пытанса ларакан яла кăмăллăн тавăрăнать:

— Кăçалхи пек тырă пирĕн уйра çитĕнмен-ха, — калаçать колхозниксемпе агротехник,—гектартан çĕраллă пăт илетпĕрех...

Çакă вăл—пушă сăмах мар, вăл — большевикăн, колхозри парторгăн, агротехника мастерĕн сăмахĕ. Архип Яковлевич уйра кашни квадратлă метртах ултçĕр-çичçĕр пĕрчĕ таран тырă шăтнине шутланă, кашни пучахрах мĕн чухлĕ пĕрчĕ пулмаллине пĕлет. Ватă колхозниксем те, çамрăк пионерсем те халĕ уйра, тырăсене пăхаççĕ, ӳстереççĕ, вĕсене пуçтарса кĕртме хатĕрленеççĕ.

Архип Яковлевич ашшĕ Яков Моисеевич утмăл тăватă çулта ĕнтĕ. Яков Моисеевич та ĕçлет-ха, вăл—колхоз хуралçи, колхозăн пуян пурлăхне сыхлать. Ĕлĕкхи пурнăçа аса илет те, уп çинчен вăл тарăхса каласа парать.

Чухăн пурăннă вăл ĕлĕк. Анисем ипçе пулнă. Выльăх сахал пирки çинçе анисем çине те тислĕк тăкайман. Тырри те десятинран 35—40 пăт çеç тухлă. Шăрăх çулсенче ялĕпех тырăсăр тăрса юлнă.

Çакăн пек чухăн пурăнаканнисем ялта вăл пĕччен çеç пулман. Вĕсем нумаййăн пулнă.

Колхозра халĕ гектартан çĕр çирĕмшер пăт тырă туса илеççĕ. Хăйăрлă çĕр çинчех колхозниксем вăйлă тырă, пахча-çимĕç, махорка ӳстерме пуçларĕç.

— Çĕре юратни, ăна лайăх пăхни кирлĕ, вара тырă та вăйлă пулать, — теççĕ халĕ колхозниксем.

Колхоз председателĕ Феофан Михеев вунă çул хушши ĕнтĕ çак чыслă ĕçре. Архип Михеев та малтанхи колхозлă çуракинченех бригадир пулса ĕçленĕ. Колхозлă çĕр çинче вăл чи малтан вăйлă тырпул туса илме пуçланă. Вăл чи малтан колхоз çĕрĕ çинче паха удобрени—торф тупнă.

Ĕлĕк хресченсем тырă акса ӳстермен вырăнсенчех колхозниксем сĕлĕ, тулă, хуратул акма пуçланă. Малтанхи çулсенче колхозниксем çак хăйăрлă çĕрсем çинче гектартан 8 центнер çеç тырă илнĕ. 1937 çулта колхоз бригадирĕ Михеев 3 гектар çĕре виçĕ участок çине уйăрнă. Пĕтĕм çĕр лаптăкĕ çинче кĕрхи çĕртме туса хăварнă, хĕлле юр тытнă. Акма ятарласах «Диппе» сĕлĕ вăрлăхĕ хатĕрленĕ, ăна лайăх сортланă, яровизациленĕ. Унтан вара çакăн пек опыт тунă: пĕрремĕш участока нимĕнле удобренисем те тăкман пулнă. Унта 12 центнер сĕлĕ туса илнĕ. Пĕр гектарлă иккĕмĕш участок çине 50 тонна торф тăкнă, 22 центнер тырă туса илнĕ. Виççĕмĕш участокра гектар çине 50 тонна торф, 2 центнер сульфат аммоний, 2 центнер суперфосфат, 1 центнер кали тăварĕ тăкнă. Унсăр пуçне, сĕлĕ шăтсан, пĕр хутчен подкормка панă. Çак участок çинчен 31,37 центнер тырă туса илнĕ.

Çакăн хыççăн вара торф тата минераллă удобренисем мĕн пек паха результатсем панине колхозниксем лайăх курнă. Çакăнтан пуçласа ĕнтĕ колхозра торфпа усă курасси анлăн сарăлса кайрĕ. Колхозра тислĕкпе торфран компостсем тума, минераллă удобренисем ытларах турттарма пуçланă. Архип Михеев ертсе пыракан бригада колхозра чи вăйлă тырпул туса илекен пулнă. 1937—38 çулсенче гектартан вăтам шутпа 22 центнер тырă туса илсе, бригадир Архип Яковлевич Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕ пулма тивĕçлĕ пулнă. 1939 çулта Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставки уçăлсан иккĕмĕш куннех Мускава — колхозсен Пĕтĕм Союзри университетне—колхозниксемпе пĕрле Архип Михеев та кайнă. Выставкăран вăл пуян шухăшсемпе, пысăк плансемпе, паха опытсемпе таврăннă. Колхоз председателĕпе Михеев юлташпа пĕрле, колхоз хуçалăхне пур енчен те вăйлатса пыма, пысăк тухăçлă тырпул туса илме çирĕп план тунă, çак плана колхозниксем те пĕтĕмпех ырланă.

1940 çулта колхоз пахча-çимĕç ĕçне малтанхи хут пуçарса янă. Выставкăри паха опытсемпе усă курса, колхоз пахча-çимĕç нумай туса илнĕ. Пахча-çимĕç сутса 80.000 тенкĕ тупăш илнĕ. Колхозра тырă та вăйлăрах туса илме пуçланă.

Иртнĕ çултанпа Архип Яковлевич колхозри агротехник. Вăл ертсе пынипе бригадăсенче çĕнĕ агротехникăна пурнăçласа пыраççĕ, çĕнĕ çитĕнӳсем тăваççĕ. Çав вăхăтрах вăл иккĕмĕш бригадăри пĕр звенона ертсе пынă. Унăн звени пĕлтĕр 14 гектар çинче, кашни гектар çинчен вăтам шутпа 22,50 центнершар тырă туса илнĕ. Уйрăм участоксенче гектартан 37 центнер таран туса илнĕ. Кăçал вăл пахча-çимĕç звенине ертсе пырать. Звено кăçал купăста, помидор, сухан, хăяр, арбуз ӳстерет.

Звенора хĕрарăмсем çеç ĕçлеççĕ. Вĕсем хăйсен ĕçне юратса тăваççĕ, ĕçе те лайăх пĕлеççĕ. Перасковья Никонова, Вера Короткова, Ольга Ефимова колхозницăсем пуринчен те лайăх тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеççĕ. Пахча-çимĕç звенисенче ĕçлекенсем çуркунне ял варринчех сад ӳстерме пуçларĕç. Агротехник ертсе пынипе кăçал садра 3500 тĕп крыжовник, 1000 тĕп акаци, 500 тĕп тополь йывăççисем лартнă. Ялта халĕ илемлĕ те чаплă сад ӳсет.

Архип Яковлевич колхозра пысăк опытлă ĕçсем тăвать. Уйра унăн опытлă участокĕсем нумай. Тĕрлĕрен тырăсем ӳстерет. Çак опытсем колхозниксене пысăк пулăшу параççĕ.

Колхозра халиччен хуратул лайăх пулман. Иртнĕ çул агротехник 3 гектар çинче опыт тунă. Кĕркунне хăйăрлă çĕре тарăн сухаланă. Суха касси айнех гектар çине 6 центнершер фосфорит çăнăхĕ тăкнă. Çуркунне, хуратул шăтса тухсанах, гектар çине 2 центнер суперфосфат тата 0,5 центнер кали тăварĕ сапнă. Çак участок çинчен вара гектартан 27 центнер хуратул туса илнĕ, çав вăхăтрах удобрени ламан çĕр çинче пĕтĕмпе те 11 центнер çеç тырă илнĕ. Кăçал ĕнтĕ колхоз 27 гектар çине хуратул акса хăварчĕ.

Агротехник кашни культурăпа опытсем тăвать. 1940 çулта 2 гектар çинче ыраш акса, çуршар гектаршар тăватă участок уйăрнă. Çак çĕр çинче çĕртме сухине тракторпа 22 сантиметр тарăнăш сухаланă, икĕ хутчен культиваци тунă. Август уйăхĕнче ыраш акнă. Хĕлле юр тытнă, юр ирĕлсенех гектар çине пĕр центнер суперфосфат, 0,5 центнер кали тăварĕ тата 1 гектар çине сульфат-аммонипе подкормка панă. Çавăнта халĕ ĕнтĕ тĕлĕнмелле ыраш çитĕнет.

Хăйăрлă çĕре лайăхлатас тĕлĕшпе колхозра уя тăм тăкаççĕ. Тăм тăкассипе кăçал тăватă опыт ирттереççĕ. Участокра 5 делянка, кашни делянкăна тăм тĕрлĕ виçепе тăкнă. Гектар çине 35—40 тонна таран тăм тăкаççĕ, торфа та çакăн чухлех тăкаççĕ. Участок çине 40 тонна торф тăкнă пулсан, тăм та 40 тонна тăкас пулать. Çапла тунипе колхоз çĕрĕсене лайăхлатма, тырă лайăх ӳсекен тума пулать.

Уйсене çĕнетессине курăксем акса та тума пулать. Çак тĕлĕшпе те кăçал кунта 3 геткар çинче опытсем тăваççĕ.

Кăçалхи çуракинче колхозра агротехникăна пурнăçа çирĕппĕн кĕртсе пынă. Вăрлăхсене пĕтĕмпех яровизациленĕ, çитмĕл процент хĕресле майпа акнă, ĕçе кĕске вăхăтра, пысăк пахалăхпа туса ирттернĕ. Хĕлле уя 5408 лав торф тăкнă, 8750 лав торфпа тислĕк компосчĕ тунă.

Колхозра халĕ çĕртме туса пĕтернĕ. Çĕртме çине кашни гектар çинех 6 центнер фосфорит çăнăхĕ тăкнă, иккĕмĕш хут сухаланă чухне гектар çине 100-шер лав тислĕк компосчĕ тăкаççĕ.

Колхозра кашни çулах стахановла шкул ĕçлет. Хĕлле шкулта 61 колхозник вĕреннĕ: лекторсем—агротехник Архип Михеев, колхоз председателĕ Феофан Михеев, геолого-минералогически наукăсен кандидачĕ Афанасьев юлташсем.

Агротехник Архип Яковлевич Михеев колхозра пархатарлă пысăк ĕç тăвать. Виçĕ çул хушши ĕнтĕ вăл Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕ.

Евгений ЕНИ.

Вăрнар р., Молотов ячĕпе
тăракан колхоз.

Сталин юлташ радио тӑрӑх тухса каланӑ сӑмах пирки ютҫӗршывсенчи хаҫатсем мӗн ҫыраҫҫӗ

ЛОНДОН, июлӗн 3-мӗш. (ТАСС). Оборонӑн Государственнӑй Комитечӗн Председателӗ И. В. Сталин радио тӑрӑх тухса каланӑ сӑмах пурне те хытӑ интереслентернӗ. Хаҫатсем пурте тенӗ пекех выступленин пӗтӗм текстне курӑнмалла вырӑнта пичетлесе кӑлараҫҫӗ. Кунпа пӗрлех Сталин юлташӑн фотографийӗсене, кун умӗн тунӑ выступленисенчен пӗрин вӑхӑтӗнче трибуна ҫинче тӑнине кӑтартса паракан фотографийӗсене пичетлесе кӑларнӑ.

«Ивнинг ньюс» Сталин юлташӑн сӑмахне ҫакӑн пек заголовокпа пичетлесе кӑларнӑ: «Сталин ҫапла пӗлтерет: Гитлерӑн ирсӗр ӗҫӗсене ҫапса аркатаҫҫех». «Ивнинг пост» хаҫат уйрӑмӑнах Сталин юлташ Черчилль сӑмахне илсе кӑтартнине паллӑ тӑвать. «Старт» хаҫат выступленине: «Сталин ҫапла каланӑ: ҫӗнтеретпӗрех» текен заголовокпа пичетлесе кӑларнӑ.

«Ивнинг пост» умстатьяра ҫапла ҫырать: «Сталин паян ирхине Кремльрен сӑмах каларӗ, ютҫӗршывсенче унӑн сасси сайра-хутра ҫеҫ илтӗнет. Ҫак выступлени вӑл Россия хӑйӗн пурнӑҫӗшӗн иккӗмӗш эрне кӗрешни ҫинчен уҫҫӑн та мӑнкӑмӑлланмасӑр каланӑ ҫыннӑн выступленийӗ. Сталин ҫапла пӗлтернӗ: вырӑс войскисем противника хирӗҫ тӑрасси ӳссе тата вӑйланса пырать. Вӑл мухтанса каламан, анчах пуҫа та усман. Хӑюллӑ та тӗрӗс сӑмахсем ӗнентерӳллӗ тата хавхалантаракан сӑмахсем пулса тӑраҫҫӗ. Сталин сӑмахӗн содержанийӗ ҫакнашкал: унӑн сӑмахӗсем Англири халӑхсене те чӗнсе калани пулса тӑма пултараҫҫӗ».

Хаҫат ҫапла ҫырать: Сталин чӗнсе калани хӑйӗн халӑхне мӗн чухлӗ тивет, пире те ҫавӑн чухлех пырса тивет. Ӗҫпе те, сӑмахпа та вӑрҫӑ ӗҫӗсене хӑвӑрт тата витӗмлӗ туса пынипе, хамӑрӑн промышленноҫа вӑйлӑн сарса пынипе эпир Совет Российине ҫакна кӑтартса памалла: унӑн интересӗсем пирӗн интерессемпе тата союзпа уйӑралми ҫыхӑнса тӑраҫҫӗ».

АФИ агентстви, Сталин выступленийӗ ҫинчен пӗлтерсе, выступленири: Наполеон ҫарне мӗнле ҫӗмӗрсе тӑкнӑ, Гитлер ҫарне те ҫавӑн пекех ҫӗмӗрсе тӑкасси пирки шанса тӑни ҫинчен калакан вырӑнсене паллӑ тӑвать.

Лондонри радиостанци паян Сталин юлташ выступленийӗн текстне француз, Норвеги, Дани, Голланди, чех тата Европӑри ытти чӗлхесемпе панӑ.

ЛОНДОН, июлӗн 3-мӗш. (ТАСС). Данири тата Норвегири ҫынсем хушшинче ҫакӑн пек сведенисем илнӗ: Сталин юлташ радио тӑрӑх тухса калани Данири тата Норвегири халӑхсен анлӑ сийӗсене паллӑ пулса тӑнӑ. Ютҫӗршывсенчен радио тӑрӑх панисене итлеме хаяррӑн чарнине пӑхмасӑрах, норвежецсемпе датчансенчен нумайӗшӗсем Мускавран паракан передачӑсене итлеҫҫӗ. Сталин юлташ тухса каланӑ сӑмахӑн содержанине ҫынсем пӗрин хыҫҫӑн теприне пӗлтернӗ. Уйрӑмӑнах Сталин юлташӑн ҫак сӑмахӗсене хӗрӳллӗн кӗтсе илеҫҫӗ: ССР Союзӗ фашистла пусмӑрҫӑсене хирӗҫ туса пыракан пӗтӗм халӑхӑн отечественнӑй вӑрҫин тӗллевӗ Совет Союзӗ умне тухса тӑнӑ хӑрушлӑха пӗтерсе хурасси кӑна мар, тата Германи фашизмӗн пусмӑрӗнче пурӑнакан Европӑри мӗн-пур халӑхсене пулӑшасси пулса тӑрать.

НЬЮ-ЙОРК, июлӗн 3-мӗш. (ТАСС). Америкӑри хаҫатсен ирхине тухнӑ изданийӗсенче Сталин юлташ радио тӑрӑх тунӑ выступленине пурне те курӑнмалла вырӑнта пичетлесе кӑларнӑ. Выступлени тексчӗ кая юлса ҫитнӗ пулсан та, «Нью-Йорк таймс» хаҫат ятарласах издани кӑларнӑ, унта выступлени текстне пӗтӗмӗшпех пичетлесе кӑларнӑ. «Нью-Йорк геральд трибюн», «Нью-Йорк пост» тата ытти хаҫатсем те ҫакнашкалах тунӑ. «П. М.» хаҫат выступленине: «Сталин Российӑна ҫапла каланӑ: Гитлера ҫӗмӗрсе тӑкатпӑрах» текен заголовокпа пичетлесе кӑларнӑ.

Ассошиэйтед пресс агентстви, Сталин юлташ выступленине пичетлесе кӑларса, ӑна ССР Союзӗпе туслӑ шухӑшпа ӑнлантарса парать. Сталин, тесе пӗлтерет агентство, Хӗрлӗ Ҫар ҫӗнтересси пирки ҫирӗппӗн шаннине кӑтартса пачӗ. Вӑрҫӑ хӑйӗн пуҫламӑш тапхӑрӗнче ҫеҫ-ха. Сталин, тесе ҫырать агентство, ҫакна кӑтартса пачӗ: Хӗрлӗ Ҫарӑн тӗп вӑйӗсем, пиншер танксем тата самолетсемпе пӗрле, ҫапӑҫӑва халӗ ҫеҫ кӗреҫҫӗ. Вырӑссем, тесе кӑтартса парать агентство, лайӑх позицисене йышӑнса тӑраҫҫӗ. ССР Союзӗн калама ҫук пысӑк вӑйсем тата вооружени пур.

ЛОНДОН, июлӗн 4-мӗш. Оборонӑн Государственнӑй Комитечӗн Председателӗ Сталин юлташ радио тӑрӑх тунӑ выступлени ҫинчен Англири хаҫатсем тимлӗн ҫыраҫҫӗ. «Стар» хаҫат ҫапла ҫырать: ҫак выступлени ҫавтери вӑйлӑ та чаплӑ чӗнӳ пулса тӑрать. Вӑл ССР Союзӗ вӗҫне ҫитиех кӗрешме йышӑннине, хӑйӗн пӗтӗм вӑйӗсемпе агрессора пырса ҫапма йышӑннине чаплӑн кӑтартса пачӗ. Сталин ҫакна кӑтартса пачӗ: Совет ҫарӗсем маневрсене йывӑрлӑхсене сирсе ярас шутпа тӑваҫҫӗ. Сталин сӑмахӗсенче чӑнлӑхпа хӑюллӑх тапса тӑраҫҫӗ. Вӑл хӑйӗн ҫӗршывӗ умӗнчи хӑрушлӑхсене пӗчӗклетмест. Унӑн решенийӗ — малашне пулмалли кӗрешӗве халӑха ҫӗклесси. Сталин яланах боевой ҫулпуҫ пулнӑ.

«Рейтер Фергюсон» дипломатиллӗ обозревателӗ ҫапла паллӑ тӑвать: Сталин выступленийӗ Лондонри ҫынсене питех те хытӑ интереслентернӗ. Ҫав выступленире ҫине тӑнӑлӑх, ҫирӗплӗх тата вӗҫне ҫитиех кӗрешме пулни курӑнса тӑрать. Унра Совет Союзӗ умӗнче тӑракан задачӑсене пӗтӗмӗшпех ӑнланса илни курӑнса тӑрать. Сталин выступленийӗ Германия юнлӑ агрессор пулнине тӑрӑ шыв ҫине кӑларчӗ.

«Таймс» хаҫат умстатьяра ҫапла ҫырать: Сталин вырӑс халӑхне хӑйӗн ҫӗршывӗн ирӗклӗхӗшӗн вӗҫне ҫитиех кӗрешме татӑклӑн чӗнчӗ. Сталин рабочисемпе хресченсене продукци кӑларассине ӳстерме, юлашки юн тумламӗ юлмиччен кӗрешме, тӑшмана ним юлмиччен пӗтерсе тӑкма, противник валли нимӗн те хӑвармалла мар, — совет халӑхӗ ҫирӗп пӗрлӗхлӗ пулнине кӑтартса парать, совет халӑхӗ Гитлера ҫапса ҫӗмӗретех. Хаҫат: Англипе США ССР Союзне пур енчен те пулӑшӗҫ, тесе кӑтартса парать.

«Манчестер Гардиан» хаҫат ҫапла ҫырать: Сталин выступленийӗнче совет патриочӗсен калама ҫук пысӑк тата мораллӗ вӑйӗсем ҫине шанса тӑни тапса тӑрать. Сталин, тесе ҫырать хаҫат, ССР Союзӗпе Германи хушшинче халӗ пыракан кӗрешӗве Гитлерпа халӑхсем хушшинче, унӑн тӗнчере пуҫпулма хӑтланнисене ҫӗмӗрсе тӑкма хатӗр тӑракан халӑхсем хушшинче пыракан вӑрҫӑ вырӑнне хурса пӑхать, ҫакӑ вӑл тӗрӗс.

НЬЮ-ЙОРК, июлӗн 4-мӗш. Сталин юлташ радио тӑрӑх тунӑ выступлени ҫинчен Америкӑри пур хаҫатсем те тимлӗн ҫыраҫҫӗ. Нью-Йоркри тата Вашингтонри хаҫатсем пекех, провинцисенчи хаҫатсем те выступленине чи курӑнмалла вырӑнта пичетлесе кӑларнӑ, хаҫатсенчен нумайӗшӗсем ӑна пӗтӗмӗшпех пичетлесе кӑларнӑ. Хаҫатсем совет халӑхӗ фашистла захватчиксене ним юлмиччен ҫӗмӗрсе тӑкиччене х кӗрешме пулнине паллӑ тӑваҫҫӗ, Сталин юлташӑн выступленийӗнче ҫак шухӑш туллийӗн палӑрса тӑрать.

«Нью-Йорк таймс» хаҫатӑн ҫар обозревателӗ Болдуин ҫапла ҫырать, — никам ҫӗнтерейми ҫарсем ҫук, тесе Сталин тӗрӗс калать. Ҫакна май Болдуин ҫапла пӗлтерет: Германири ҫар журналӗсенчи статьясем те, Германи ҫарӗн операцийӗсем ҫинчен ҫыракан статьясем, Германи салтакӗсене час-часах иккӗленӳллӗ шухӑшсем ҫавӑрса илнине кӑтартса параҫҫӗ.

ЖЕНЕВА, июлӗн 4-мӗш. Прагӑри, Братиславӑри тата Чехословакири ытти хуласенче те пиншер чехсем, словаксем Оборонӑн Государственнӑй Комитечӗн Председателӗ И. В. Сталин радио тӑрӑх тунӑ выступлене вӑрттӑн итленӗ. Влаҫсем ятарласах полицейскилле мерӑсем йышӑннӑ пулсан та, ҫав выступленин содержанийӗ халӑхӑн анлӑ массисемшӗн паллӑ пулса тӑрать. Сталинӑн питех те вӑйлӑ сӑмахӗсем фашистла пусмӑрта пурӑнакан чехсемпе словаксен чӗрисенчи шанчӑка ҫирӗплетрӗҫ, вӗсем гитлерла режимпа пусмӑрлӑх пӗтсе ларасси инҫех юлманни пирки халӗ тата ытларах шанаҫҫӗ. Чехсемпе словаксенчен нумайӗшӗсем ҫапла калаҫҫӗ: Гитлер вӗсене ССР Союзне хирӗҫ вӑрҫма тӑратма пултарас ҫук. Иртнӗ вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи пекех вӗсем хӑйсен хӗҫпӑшалӗсене алла илсе, фашизма хирӗҫ пӗр пулса ҫапӑҫма, хӑйсен вырӑс тӑванӗсем енне каҫӗҫ.

СТОКГОЛЬМ, июлӗн 4-мӗш. Каҫхине тухнӑ хаҫатсем Сталин юлташ радио тӑрӑх тухса калани ҫинчен тӗплӗн ҫырса кӑларнӑ. Хаҫатсенчи заголовоксем ССР Союзӗ тӑшмана ҫӗнтересси пирки Сталин юлташ ҫирӗппӗн шантарса каланине паллӑ тӑваҫҫӗ.

ЧУНЦИН, июлӗн 4-мӗш. Хаҫатсем Сталин юлташ радио тӑрӑх тунӑ выступленине пичетлесе кӑларнӑ.

«Чжунянжибао» хаҫат умстатьяра ҫапла ҫырать: Сталин выступленийӗ Совет Союзӗнчи халӑхсене ҫӗклентерсе хавхалантарать. Сталин: Хӗрлӗ Ҫар Гитлера аркатса тӑкмаллах ҫапӗ, тесе пӗлтерни питех те тӗрӗс. Сталин выступленийӗнче фашизма хирӗҫ татӑклӑн кӗрешес шухӑш тапса тӑрать. Юлашкинчен хаҫат: Гитлер ССР Союзне хирӗҫ агресси пуҫланипе хӑйне валли вилӗм шӑтӑкӗ алтать, тесе ҫырать.

СТАМБУЛ, июлӗн 4-мӗш. Сталин юлташ радио тӑрӑх тухса калани Турцири ҫынсене пысӑккӑн интереслентернӗ. Кӑнтӑрлахи хаҫатсем пурте Сталин сӑмахне «Сталин совет халӑхне чӗнсе калани» текен заголовоксемпе курӑнмалла ҫӗрте пичетлесе кӑларнӑ. Хаҫатсем уйрӑмӑнах ҫӗнтерес ирӗк-кӑмӑла тата шанчӑка, тӑшмана ҫӗмӗрсе тӑкасси ҫинчен каланӑ вырӑнсене паллӑ тӑваҫҫӗ. (ТАСС).

Хӗрлӗ Ҫарӑн боевой хӑвачӗпе унӑн геройла кӗрешӗвӗн перспективисем ҫинчен ютҫӗршывсенчи хаҫатсем мӗн ҫыраҫҫӗ

ЛОНДОН, июлӗн 4-мӗш. (ТАСС). Рейтер агентствин авиаци обозревателӗ, совет авиацийӗн хӑватне хакласа, ҫапла ҫырать: Российӑн сывлӑш флочӗ калама ҫук пысӑк. Вырӑссен хӑюллӑ та паттӑр тата ҫирӗп шухӑш-кӑмӑллӑ летчикӗсем питех пысӑк йывӑрлӑхсене тӳссе ирттерме пултараҫҫӗ. Типӗ ҫӗр ҫинчи войскӑсене авиаци пулӑшассине,—юлашки ҫулсенче ҫак ӗҫ ҫине тимлӗн ҫаврӑнса пӑхнӑ,—халӗ совет авиацийӗ практикӑра пурнӑҫласа пырать. Ҫак шутпа унӑн составӗнче лайӑх самолетсем пит нумай пур.

«Таймс» хаҫатӑн Стокгольмри корреспонденчӗ ҫапла ҫырать: Германирен паракан пӗлтерӳсем тӑрӑх шутласан та, нимӗҫсем сывлӑшра нихӑш ҫӗрте те ҫиеле тухайман. Хӗрлӗ Ҫар вӑйлӑн хирӗҫ тӑрса ҫапӑҫни Германия шутласа хунисене пӗтерсе хучӗ. Ҫав тӑтӑшах пыракан тата маневрсем тӑвакан ҫапӑҫусенче горючи питех те пысӑккӑн расходланать, хӑшпӗр даннӑйсем тӑрӑх, нимӗҫсем умне халех ӗнтӗ горючине мӗнле тӑратасси ҫинчен ҫеҫ мар, тата ӑна ӑҫтан тупмалли ҫинчен те ыйту тухса тӑрать.

«Дейли экспресс» хаҫатӑн Анкарари корреспонденчӗ пӗлтернӗ тӑрӑх, Анкарара пурӑнакан нимӗҫсем ҫакна йышӑнмаҫҫӗ: Германи войскисен операцийӗсем палӑртнӑ план тӑрӑх пулса пымаҫҫӗ тата ҫынсемпе вооружени тӗлӗшӗнчи ҫухатӑвӗсем калама ҫук пысӑк.

СТАМБУЛ, июлӗн 4-мӗш. (ТАСС). «Ени Сабах» хаҫат Турци генералӗн Кочерӑн пысӑк статьине пичетлесе кӑларнӑ, статьяра Совет Союзӗпе Германи хушшинчи вӑрҫӑн перспективисем пирки каланӑ. Автор ҫапла кӑтартса парать: вырӑс ҫарӗ чи хӑюллӑ та паттӑр ӗҫсем тата хӑвӑрт маневрсем тума пултарать. Пӗлтерӳсем ҫакна ҫирӗплетеҫҫӗ: советӑн сывлӑшри вӑйӗсем ҫирӗппӗн ҫапӑҫаҫҫӗ, пехота хӑйне ҫирӗппӗн тытать. Российӑн оборонӑллӑ хӑвачӗн ҫӑлкуҫӗсем вӗҫӗмсӗр нумай. Совет ҫамрӑкӗсем ҫарта хӑйсен тивӗҫне чаплӑн пурнӑҫлаҫҫӗ, ҫавӑн пек ҫара ҫӗнтерме йывӑр. Вырӑс авиацийӗ пултаруллӑ, ҫивчӗ тата хӑйсен ӗҫӗсене вӗҫӗмсӗр парӑннӑ летчиксем хатӗрленӗ. Вырӑссен парашютлӑ соединенийӗсенче специалистсем, командирсемпе рядовойсем ҫӗршер пинӗн шутланаҫҫӗ. Совет ҫарӗ хӑйӗн оборонӑллӑ задачисене пурнӑҫа кӗртесси пирки иккӗленме нимӗнле сӑлтав та ҫук.

ЧУНЦИН, июлӗн 4-мӗш. (ТАСС). «Синьшубао» хаҫат «Германия поражени тӳсетех» ятлӑ статья пичетлесе кӑларнӑ. Статьяра ҫапла каланӑ: Германи войскисем советӑн хӑшпӗр территорийӗсене туртса илнине ҫакӑнпа ӑнлантарса памалла: Германия, чикӗре Хӗрлӗ Ҫарӑн регулярнӑй чаҫӗсем ҫителӗклӗ таран пулманнипе усӑ курса, СССР ҫине кӗтмен ҫӗртен тапӑнчӗ. Статья авторӗ ҫапла кӑтартса парать: хӑйӗн пӗтӗм вӑйӗсене сарса ярсан, ССР Союзӗ авиаципе танксем тӗлӗшпе противникран чылаях вӑйлӑ пулать. Совет артиллерийӗпе кавалерийӗ Германи артиллерийӗпе кавалерийӗнчен чылай ҫӳлте тӑраҫҫӗ. Хӑйӗн экономикӑллӑ ресурсӗсем тӗлӗшпе те СССР Германирен пуянтарах.

Нимӗҫсемпе итальянецсем ССР Союзне хирӗҫ кӗрешнӗ ҫӗрте Болгари порчӗсемпе усӑ курма йышӑннӑ

КИШИНЕВ, июлӗн 4-мӗш. (ТАСС). Илнӗ сведенисем тӑрӑх нимӗҫсемпе итальянецсем, совет авиацийӗ Констанца хулине ҫӗмӗрсе тӑкнӑ пирки, Болгарин Варна тата Бургас порчӗсемпе усӑ курма йышӑннӑ. Ҫав портсем Германипе Итали ҫар вӑйӗсемшӗн совет порчӗсене хирӗҫ кӗрешмелли базӑсем пулаҫҫӗ. Ҫак шутпа Италирен темиҫе вуншар миноносецсемпе ытти суднӑсене, Болгария сутӑн илнӗ тинӗс-ҫар суднисем пек кӑтартса, Болгарири портсене илсе пыраҫҫӗ. Ҫапла вара тӗнӗл государствисем тата Болгария Совет Союзӗн Хура тинӗс ҫинчи флочӗн сыхӑлӑхне улталама хӑтланаҫҫӗ.

Англи авиацийӗ Крупп завочӗсем ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ

ЛОНДОН, июлӗн 4-мӗш. (ТАСС). Авиаци министерстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Англин сывлӑш-ҫар вӑйӗсем июлӗн 4-мӗш ыран тенӗ чух ҫӗрле, Ҫурҫӗр-Хӗвеланӑҫ Германи ҫине ҫӗнӗрен пырса тапӑннӑ. Англи бомбардировщикӗсен бомбӑсем пӑрахмалли тӗп объектсем Эссен, Бремен тата Бремерхафен пулнӑ.

Эссен ҫине тапӑннӑ чухне Крупп завочӗсем ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ. Эссенра тата Рурӑн ытти районӗсенче пысӑк пушарсем тухнӑ. Германин ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫ пайӗнче Англи авиацийӗ Бременри порт тата Бремерхафенри промышленноҫлӑ районсем ҫине вӑйлӑн пырса тапӑннӑ.

Англин ҫичӗ самолечӗ хӑйсен базине таврӑнман.

Австрире фашистсене хирӗҫ кӗрешни

ЛОНДОН. июлӗн 4-мӗш. (ТАСС). Англири «Дейли геральд» хаҫат Австрипе Чехословакире фашистла влаҫсене хирӗҫ ишӗлтерӳллӗ ӗҫсене массӑллӑн туса пыни ҫинчен пӗлтерет. Австрирен пырса ҫитнӗ пӗр ҫын хаҫат корреспондентне ҫапла пӗлтернӗ: саботажпа диверсисене вӑрттӑн ӗҫлекен пысӑк организаци туса пырать. Фашистсем Зальцкаммергут текен местечкӑран икӗ миляра вырнаҫнӑ ҫӗр айӗнчи калама ҫук пысӑк бензинохранилищӗне (100 пин тонна таран вырнаҫакан) тимлӗн хуралласа тӑнӑ. Ҫакӑн ҫинчен ҫӳлте асӑннӑ вӑрттӑн организаци пӗлнӗ. Темиҫе кун каялла ҫав бензинохранилищӗре взрыв пулса пушар тухнӑ. Вӑл виҫӗ кун хушши пынӑ.

Австрири вӑрҫӑ хатӗрӗсем тӑвакан пӗр завода ҫӗмӗрсе тӑкма питех те йывӑр пулнӑ. Заводри нумай пунктсене взрыв тӑвакан веществосем хурса тухнӑ. Ҫакӑн хыҫҫӑн заводри электростанцире авари пулнӑ. Фашистсем ҫакна палӑртнӑ: ҫакӑ вӑл диверси акчӗ пулнӑ, ремонт ӗҫне шанчӑклӑ фашистсене ҫеҫ тутарма хушнӑ. Ремонт тума тытӑнсан, пӗтӗм завод взрыв пулса арканса кайнӑ, унта пулнӑ фашистсенчен пӗри те сӑланайман.

Туртса илнӗ ҫӗршывсем фашистла вӑрӑ-хурахсене мӗн чухлӗ тӳлеҫҫӗ

Англин ютҫӗршыв ӗҫӗсен министрӗн заместителӗ Батлер нумай пулмасть, Германи фашисчӗсем туртса илнӗ ҫӗршывсене мӗнле ҫаратни ҫинчен даннӑйсем илсе кӑтартнӑ.

Ҫав ҫӗршывсен Германин оккупациллӗ ҫарӗсене тытса тӑмалла, вӗсене пысӑк шалу парса тӑмалла. Батлер оккупантсене тытса тӑма ҫулталӑкне (оккупаци тӑвичченхи курс хакӗпе) ҫакӑн пек тӳлемеллине илсе кӑтартнӑ.

ҪӖРШЫВСЕМ	Германин оккупациллӗ ҫарне тытса тӑма ҫулталӑкне ҫакӑн чухлӗ кирлӗ	Кашни ҫын пуҫне тивекен сумма
Норвегия	68 миллион фунт стерлинг	25 фунт стерлинг
Франция	827 „ „ „	20 „ „
Дания	26 „ „ „	8 „ „
Бельгия	75 „ „ „	8 „ „
Голландия	54 „ „ „	6 „ „

Пилӗк ҫӗршыв Германин оккупациллӗ ҫарне тытса тӑма ҫулталӑкне пӗр миллиард та 050 миллион фунд стерлинг расходлаҫҫӗ. Кунсӑр пуҫне Германи Польшӑран, Чехословакирен, Румынирен, Болгарирен, Югославирен тата Грецирен пысӑк сумма илет. Анчах та вӗсене тӗрӗс учета илме май килмест. Норвегин Германие вӑрҫӑчченхи нациллӗ доходран виҫӗ пайӗнчен пӗр пайне тӳлеме тивет.

Ҫакна та палӑртмалла: оккупациленӗ ҫӗршывсем Германие тавар нумай яраҫҫӗ, анчах та вӗсем унран хӑйсем янӑ таварӑн темиҫе хут сахал илеҫҫӗ. Ҫак ытлашши таварсемшӗн Германи хут маркӑпа тӳлет, унӑн нимӗн чухлӗ те хакӗ ҫук. Ҫакӑнпа пӗрлех фашистсем халӑхӑн пурлӑхне туртса илсе вӗсене Германие яраҫҫӗ. (ТАСС).

Сывлӑшран килсе тапӑннинчен сыхланма хатӗрленеҫҫӗ

КУКЕҪ. Районри оборонӑллӑ обществӑсен активӗ июлӗн 3-мӗшӗнче сывлӑшран килсе тапӑннинчен тата химиллӗ тапӑнуран сыхланма халӑха вӗрентсе хатӗрлемелли ӗҫсем ҫинчен сӳтсе-яврӗ.

Ялсенче пур ҫӗрте те самозащита групписем тӑваҫҫӗ. Район центрӗнче 6 группа организациленӗ, вӗсем занятисем ирттерме тытӑннӑ.

СЕНТЕР. Ӗҫсыннисем сывлӑшран килсе тапӑннинчен сыхланма хатӗрленеҫҫӗ. Районӗпе 46 группа организациленӗ. Ялсовечӗсенче штабсем ӗҫлеҫҫӗ. Халь инструктор-командирсене уйӑраҫҫӗ тата вӗсене вӗрентеҫҫӗ.

Район центрӗнче вӗренӳ ӗҫне 100 ҫынна явӑҫтарнӑ.

Чӑваш АССР территорийӗнчи ухута правилисем ҫинчен

Чӑваш АСС Республикин территорийӗнче пурӑнакан тискер-кайӑксем, ҫавнашкалах вӗҫен кайӑксем государствӑн ухута фондӗнче шутланаҫҫӗ. Вӑл тискер-кайӑксене тата вӗҫен кайӑксене пӑшалпа персе е урӑх майсемпе тытни ухута пулса тӑрать. Ҫавнашкалах ухутана ҫӳремелли вырӑнсенче (пурне те ҫӳремелли ҫулсем ҫук ҫӗрте) пӑшалпа, капкӑнсемпе е ухутана ҫӳремелли йытӑсемпе тата ытти япаласемпе ҫӳрени ухутана ҫӳренипе пӗрех шутланать.

Ухутана ҫӳремелли вырӑнсем — пурне те усӑ курмаллисем тата уйрӑм ухута вырӑнӗсем, охотниксен организацийӗн аллине ҫирӗплетсе панисем пур. Вӗсене ухута хуҫалӑхӗсем теҫҫӗ. Хуласем ҫывӑхӗнчи хула вӑрманӗсенче ухутана ҫӳремелли вырӑнсем хула совечӗсен аллинче шутланаҫҫӗ, ку вырӑнсене ухута заповедникӗсем теҫҫӗ.

Чӑваш АСС Республикин территорийӗнче пур вырӑнсенче те ҫулталӑкӗпех нихӑш вӑхӑтра та ҫак тискер-кайӑксене тата вӗҫенкайӑксене тытма юрамасть: пӑши, выдра, сӑсар, норка, ҫутӑ пӑсара, ласка, сӑвӑр, ӑтӑр, каюра тата ытти вырӑнсенчен кӳрсе килсе ухута хуҫалӑхне янӑ тӗрлӗрен тискер-кайӑксем; вӗҫенкайӑксенчен — карӑк, сарӑ хир чӑххи тата хуракӑш.

Ялхуҫалӑхне тата ҫавнашкалах вӑрман хуҫалӑхне усӑ кӳрекен вӗҫенкайӑксене ҫаксене тытма юрамасть: улакайӑк, куккук, кӑвакарчӑн, кӑсия, чӗкеҫ, вӗршӗн тата юрлакан ытти вӗтӗ кайӑксем. Ҫавнашкалах тата шултра кайӑксенчен кобчиксене, шаланкӑсене, тӑманасене (ӳхӗсӗр пуҫне) тата луньсене тытма юрамасть.

Тиршӗн тытакан тискер-кайӑксене ҫак сроксенче тытма юрать: пакшасене—ноябрӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа февралӗн 15-мӗшӗччен; тилӗсене, юссене, хура пӑсарасене тата мулкачсене ноябрӗн 15-мӗшӗнчен пуҫласа февралӗн 15-мӗшӗччен; барсуксене октябрӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа декабрӗн 1-мӗшчен тытма юрать.

Вӗҫенкайӑксене тытмалли ҫуллахи тата кӗркуннехи ухута вӑхӑчӗ ҫакӑн пек пулать: ӑсансене—августӑн 10-мӗшӗнчен декабрӗн 1-мӗшӗччен; пӑчӑрсене — октябрӗн 1-мӗшӗнчен февралӗн 15-мӗшӗччен; ытти вӗҫенкайӑксене (тытма ирӗк панисене) августӑн 10-мӗшӗнчен пуҫласа февралӗн 15-мӗшӗччен.

Ялхуҫалӑхне сиен кӳрекен (кышлакан) кайӑксене — арлансене, йӗкехӳресене, шӑшисене, пур вӑхӑтра та тытса пӗтерме юрать. Анчах, ухутана ҫӳреме чарнӑ вӑхӑтра вӗсене тытнӑ чух пӑшалсемпе, йытӑсемпе усӑ курма юрамасть. Сиен кӳрекен тискер-кайӑксене тата ҫавнашкалах сиенлӗ вӗҫенкайӑксене ҫулталӑкри пур вӑхӑтсенче те тытса пӗтерме юрать. Ухутана ҫӳреме чарнӑ вӑхӑтра тытас пулсан, малтан охотниксен инспекцинчен ирӗк илес пулать.

Ухута правилисене пурнӑҫа мӗнле кӗртсе пынине охотниксен инспекцийӗ, вӑрман хуралҫисем, милици органӗсем, ялсовечӗсем тата тискер-кайӑксен мамӑк-тирӗсене хатӗрлекен организацисем асӑрхаса тӑраҫҫӗ.

Ухутана ҫӳреме ирӗк паман вӑхӑтра тытма юраман тискер-кайӑксене тата вӗҫенкайӑксене хӑйсен ирӗкӗпе тытакансенчен ухута хуҫалӑхне кӳнӗ сиеншӗн, кашни тискер-кайӑк е вӗҫенкайӑк мӗнчухлӗ тӑнине шутласа, укҫа шыраса илеҫҫӗ. Ӑна охотниксен инспекцийӗ асӑрхаса тӑрать. Ухута правилисене пӑсакансене тупса кӑтартакансем штраф укҫинчен преми шучӗпе ҫуррине илме пултараҫҫӗ, штраф укҫинчен ҫурри государство бюджетне каять.

Ухута правилисемпе ухута срокӗсем ҫинчен Чӑваш АССР Совнаркомӗ ҫумӗнчи Госохотинспекци кӑларнӑ положенине Чӑваш АССР Совнаркомӗ 1941 ҫулти июнӗн 28-мӗшӗнче постановлени йышӑнса ҫирӗплетнӗ. Положенири правилӑсем малалла икӗ ҫуллӑха пымалла. Кивӗ правилӑсене пӑрахӑҫа кӑларнӑ.

Ответлӑ редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Предприяти, учреждени руководителӗсене, колхоз председателӗсене, пурӑнмалли ҫуртйӗрсен управляющийӗсене тата пур граждӑнсене те

ПӖЛСЕ ТӐМА

Вут-кӑвар хӑвӑрт сарӑлас хӑрушлӑха пӗтерес тата пушара сӳнтерес ӗҫе ҫӑмӑллатас шутпа, хӑвӑрӑн промышленность предприятийӗсенче, учрежденисенче, пурӑнмалли ҫуртйӗрсенче, колхозсенче халех пушара хирӗҫле ҫакнашкал мероприятисене туса ирттерӗр:

1. Чердаксене, коридорсене тата цехсене хӑвӑрт хыпса тивме пултаракан кирлӗ мар япаласенчен тасатӑр. Предприятисен, складсен, килкартишсен тата уйрӑм кварталсен территорийӗсенчен кирлӗ мар ӑпӑр-тапӑрсене тасатӑр.
2. Чердаксен чӳречисене кантӑксем лартӑр. Чердаксен алӑкӗсене хытарӑр, яланах хупса тӑратӑр.
3. Хваттерсенче краҫҫин запасне 8 литртан мала ан тытӑр.
4. Кӑмака трубисенчи хӑрӑма тӑтӑшах тасатса тӑрӑр.
5. Пушара сӳнтермелли хатӗрсем (огнетушительсем, чӑптасенче тата ещӗксенче хӑйӑр, каткасемпе шыв, пуртӑсем, кӗреҫесем, витресем, лумсем, багорсем) хатӗрлӗр; огнетушительсене—пусмасем, коридорсенче, сарайсемпе чердаксем патӗнче, насос пыршисемпе кӗпҫисене — водопровод кранӗсем патӗнче, ытти хатӗрсене — ҫуртйӗре кӗнӗ тата хӑвӑрт илсе усӑ курма май паракан вырӑнсенче вырнаҫтарса хурӑр. Пушар кранӗсене тата электропроводсене йӗркене кӗртсе ҫитермелле.
6. Пушарпа кӗрешмелли звеносемпе группӑсене организацилеме халех тытӑнмалла.
7. Пушара хирӗҫ кӗрешес тӗлӗшпе ӗҫлекен звеносемпе самозащита групписене огнетушительсене тыткалама, пушара хӑйӑрпа сӳнтерме, зажигательнӑй авиабомбӑсене тыткалама, хӑвӑрт хыпса ҫунакан япаласене тата горючисене мӗнле майсемпе сӳнтермеллине вӗрентӗр.
8. Пушара хирӗҫ кӗрешекен звеносен тата группӑсен занятийӗсене ирттерме вырӑнсенче инструкторсем пулман чухне, вырӑнсенчи пожарнӑй охранӑсенчен (вӗсем пур ҫӗрте), хуласенчи командӑсемпе ирӗклӗ дружинӑсенчен ыйтса пӗлӗр, вӗсем инструкторсем пама тивӗҫлӗ.

Пушартан сыхланас тӗлӗшпе тумалли ӗҫсене туса ҫитернине тӗрӗслесе тухӑр. Пушартан сыхланмалли мероприятисене пӑснӑ кашни факт ҫинчен пожарнӑй охранӑсен органӗсене пӗлтерсе тӑрӑр.

Чӑваш АССР НКВД пожарнӑй охрана отделӗ.

ЧУВАШСКАЯ
ЮРИДИЧЕСКАЯ ШКОЛА
ОБЪЯВЛЯЕТ ПРИЕМ СЛУШАТЕЛЕЙ НА 1941—42 уч. ГОД.
ЮРИДИЧЕСКАЯ ШКОЛА ГОТОВИТ КАДРЫ РАБОТНИКОВ ДЛЯ ОРГАНОВ СУДА, ПРОКУРАТУРЫ, НОТАРИАТА И АДВОКАТУРЫ
СРОК ОБУЧЕНИЯ 2 ГОДА

В школу принимаются граждане обоего пола в возрасте от 18 до 40 лет, имеющие образовательную подготовку в объеме семи классов средней школы и не менее двух лет стажа работы в партийных, советских, комсомольских и профессиональных организациях.

Прием заявлений о поступлении в юридическую школу производится с 1 июня по 20 августа. Приемные испытания будут проходить с 1 по 25 августа по Конституции СССР, истории народов СССР, русскому языку и литературе.

Заявления подаются на имя директора юридической школы. К заявлению должны быть приложены следующие документы:
а) автобиография (подробная);
б) документ об образовании (в подлиннике);
в) справка об отношении к воинской обязанности (для военнообязанных);
г) справка о состоянии здоровья;
д) характеристика от партийных, советских и общественных организаций;
е) три фотокарточки (снимки без головных уборов) с собственноручной подписью и заверенные государственным учреждением.

Все расходы, связанные с проездом на приемные испытания, относятся на счет поступающих. На время приемных испытаний школа предоставляет бесплатное общежитие.

На стипендию зачисляются слушатели, получившие на приемных испытаниях по двум предметам „отлично" и по одному не ниже „хорошо", а также окончившие десятилетку, рабфак или среднюю школу взрослых и экстерната за десятилетку в 1941 году на „отлично". Размер стипендии установлен в 200 рублей в месяц. Плата за обучение 150 руб. в год. Зачисленные в школу обеспечиваются общежитием.

Заявление направлять: гор. Чебоксары, ЧАССР, ул. Калинина, дом № 36. Телефон 6—88.

ДИРЕКЦИЯ.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, редактор заместителӗн — 3—97, редакци секретарӗн — 4—40, пропаганда пайӗн — 4—97, парти пурнӑҫ пайӗн — 7—97, ялхуҫалӑхӗпе промышленность пайӗсен — 0—88, ҫырусемпе рабселькорсен пайӗн — 2—30, «Ӗҫхӗрарӑмӗ» тата «Хатӗр пул» журналсен — 6—23, «Ленин ҫулӗпе» журналӑн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 3141

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР, Заказ Ь 345. ф. 6. 58 84 п. л.